Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 НОЙАБĔР 20 ВЫРСАРНИКУН 266 (5079) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—7—97, йалхуçалăх пайĕн — 4—97, советсен пайĕн—0—88, промышленнăç пайĕн—0—85, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Çитес çуракине ваљљи пысăк пахалăхлă вăрлăх хатĕрлер

Йалта колхоз стройĕ йаланлăхах çĕнтерчĕ. Бољшевиксен партипе совет правителствин куллен йертсе тата пулăшса пынипе пирĕн колхозсем хăйсен хуçалăхĕсене вăйлăн ӳстерсе пымали çул çине тăчĕç. Сталинла икĕ пилĕкçуллăх колхозсене малта пыракан техникăпа хĕçпăшаллантарчĕ. Колхозлă аслă уй-хирсенче хаљ чи сложнăй машинăсем, трактăрсемпе комбайнсем ĕçлеççĕ.

„Пирĕн çĕршывра колхозсем, колхоз стройĕ мĕнпур çĕнĕ техникăпа, çĕнĕ организаципе йалхуçалăхне ӳсме тата колхозниксен пурнăçне лайăхлатма калама çук лайăх условисем туса пачĕ, вĕсем çинчен ĕлĕкхи хресчен ĕмĕтленме те пултарайман". (В. М. Молăтăв).

Ĕççыннисен материаљнăй пурнăçĕ чылай лайăхланчĕ, пурăнма аванрах, хаваслăрах пулса тăчĕ. Колхозниксен хаљ тырпул çителĕклĕ, малашне тата нумайрах пулĕ.

Çак фактсем ĕнтĕ, Сталин йулташ çулсерен 7—8 мĕлйард пăт тĕштырă тума пана лозунгшăн пирĕн колхозсем бољшевикла кĕрешме пĕлнине, çак çул çинчи кирек мĕнле йăвăрлăха та çĕнтерме пултарнине кăтартса параççĕ.

Анчах, пирĕн кĕрешсе илнĕ çитĕнӳсем çинче лăпланса лармала мар. Кăçал лайăх ĕçленĕ пулсан, çитес çул тата лайăхрах ĕçлеме тăрăшмала.

Нойабĕрĕн 17-мĕшĕнче тухнă „Чăваш Коммунĕ" хаçатра Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „1939 султа суртлă вăрлăхсемпе акмали, вăрлăхсен страхфондне тумали тата çуракинче акма суртлă çурхи тырăсен вăрлăхĕсене улăштармали план çинчен" йышăннă постановленине пичетлесе кăларнă. Çак постановлени кашни районшăн, колхозшăн çитес çураки валљи кирлĕ таран паха, шултра вăрлăхсем вăхăтра хатĕрлеме конкретлă ĕç программи пулса тăрать.

Çитес çуракинче пирĕн пур тырăсене те суртлă тата пысăк тухăçлă вăрлăхсемпе çеç акса хăвармала. Çавăнпа та, колхозсенче тата районсенче суртлă вăрлăхсем çителĕклĕ пултăр тесе, тата вăрлăхлăх участкăсене пахалăхлă вăрлăхсемпе акса хăвармала пултăр тесе, Халăх Комиссарĕсен Совечĕ колхозсем хушшинче суртлă вăрлăхсем 21.047 центнĕр, районсем хушшинче 2.633 центнĕр улăштарма план çирĕплетнĕ. Суртлă вăрлăхсене улăштарма халех тытăнмала, ку ĕçе 1939 çулти йанварĕн 1-мĕшчен кайа йулмасăр пурнăçламала. Халăх Комиссарĕсен Совечĕ вырăнти организацисене уйрăмăнах пăрçа йышши куљтурăсене, çĕрулми тата нумай çул ӳсекен курăксен вăрлăхĕсем çине тимлĕн пăхма хушать. Мĕншĕн тесен, çав вăрлăхсем çителĕклĕ пулман пирки те пусуçаврăнăшĕсем сахал мар пăтраннă.

Халех кашни колхозăн вăрлăхлăх уйăрса хунă тырпулсене сортировкăпа трийĕр витĕр суртласа тасатса кăларма тытăнмала. Ку ĕçе, иртнĕ çулхи пек, çуркуннене хăварни пулмала мар. Районсенчи пур пек сортировкăсемпе трийĕрсене пурне те ĕçе йамала йусавсăр лараканни сене хăвăрт йусаттармала. Машинăсем çитмеççĕ тесе ним тумасăр вăхăта ирттерни сийенлĕ. Пур колхозсенче те вăрлăх тасатнă çĕрте уйрăм звеносем ĕçлемеле. Районсенчи çĕрĕç пайĕсен вăрлăхсене йанварĕн 1-мĕш тĕлне пĕтĕмпех тасатса çитерме пур колхозсем валљи те график туса парса, çав графике куллен пурнăçламала. Кунпа пĕрлех, вăрлăхсен страхфондне, йалхуçалăх ертелĕн уставĕ тăрăх, вăрлăх мĕнпурĕ кирлинчен 10—15 процент таран хывмала. Ку ĕçе декабĕрĕн 1-мĕшне туса çитерес пулать. Тасатнă вăрлăхсене хумали кĕлетсене хатĕрлесе вĕсене лайăх дезинфекцилемеле. Вăрлăхсене хунă чухне вĕсен суртне тата категорисене пĕрлештерсе йама йурамасть. Вăрлăхлăх уйăрса хăварнă тырпулсене вут-кăвартан тата вăрласран сыхă тытмала.

Вăрлăха йаровизацилесе акнă çĕрте тырпул тухăçĕ ӳсни пур колхозсемшĕн паллă. Çавна шута илсе, çитес çуракинче акмали çĕр лаптăкĕн 40 процентĕнчен кайа мар йаровизациленĕ вăрлăхсемпе акса хăварни кирлĕ. Паллах, ку ĕçе тума та халех хатĕрленсе пымала. Вăхăтра кадрсем вĕрентсе хатĕрлемеле, вăрлăха йаровизацилеме çуртсем, градусниксем тата ытти ĕç хатĕрсене те çуркуннеччен хатĕрлесе çитермеле. Вĕсемпе пĕрлех, пур колхозсенче те тулă вăрлăхне халех типĕ майпа „АБ" йатлă аппаратпа протравит туса хурас пулать.

Çитес çуракине лайăх хатĕрленес тĕлĕшпе колхозсенче социалисăмла ăмăртăва анлăн сарса пыни кирлĕ. Çуллен 7—8 мĕлйард пăт тырă илессишĕн татах та вăйлăрах, тата та лайăхрах ĕçлемеле. Халех пур колхозсенче те йалхуçалăх машинĕсемпе ĕç хатĕрĕсене йусаттарма тытăнас пулать. Машинă-трактăрлă станцисен трактăрсемпе комбайнсене йусас тĕлĕшпе тунă графике пурнăçа кĕртсе пымала. Кунпа пĕрлех, МТС директăрĕсен иртнĕ çул трактăрсемпе ытти йалхуçалăх машинĕсене ытла та начар йусанă пирки кăçал трактăр паркĕ çителĕксĕр ĕçленине хисепе илсе йалхуçалăх машинисене ремонтланĕ чухне уйрăмăнах ремонтăн пахалăхĕ çине тимлĕн пăхни кирлĕ.

Çитес çуракине анăçлăн иртерессине чи малтан паха вăрлăх хатĕрлени татса парать. Ку тĕлĕшпе вырăнсенчи партипе совет тата çĕрĕç оргăнĕсем çине пĕтĕм ответлăх ӳкет. Çуракине хатĕрленес ĕçри пур çитменлĕхсене те пĕтерме тата çитес çуракине чыслă иртерме колхозниксен массине анлăн хутшăнтарса пымала.

РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн УКАЗĔ

Чăваш АСС Республикĕнчи Шупашкар районĕнчи йалсен тата йалсовечĕсен йачĕсене улăштарасси çинчен

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ Протопопихă йалне Заводскойе йалĕ тата Протопопихă йалсоветне Заводский йалсовечĕ, Голодйайĕвкă йалне Сосновкă йалĕ тата Голодйайĕвски йалсоветне Сосновски йалсовечĕ, Свечкино йалне Рйабинăвкă йалĕ, Побои йалне Хурăнлăх йатлă тăвасси çинчен йышăннă постановленине çирĕплетес.

РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн
Председателĕ—А. Бадайĕв.
РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн
Çекретарĕ—Г. Козлов.

Мускав, Кремљ.
1938 çулти нойабĕрĕн 9-мĕш.

„СССР В-8" дирижабљ Ленинградран Мускава вĕçни

Нойабĕрĕн 18-мĕшĕнче, ирхине 8 сехет те 40 минутра „СССР В—8" дирижабљ,—командир Почекин пулнă,—Ленинградран Мускава вĕçсе тухнă. Бортра, командирсăр пуçне, тата 8 çын.

Метеорологи условисем йăвăр пулнă пулсан та (дирижабљ гондолĕсем шăнса ларнă) дирижабљ трассă тăрăх тĕрĕс пынă, 14 сехет те 30 минутра Мускава çитсе дирижабљ портне анса ларнă.

Материаљнăй чаç лайăх ĕçленĕ.

Ленинградпа Мускав хушшинчи çула 5 сехет те 50 минут хушшинче вĕçсе тухнă.

(ТАСС).

Куллен кирлĕ таварсем

Йăвăр промышленнăç савăчĕсем 4-мĕш квартăлта чылай çĕнĕ йышши, куллен кирлĕ таварсем кăлараççĕ. Рынăка хĕрĕх тĕрлĕ куçкĕски тухмала, вĕсенчен пысăк пайĕ — йатарласах колхозниксем валљи тунăскерсем. Стакан айĕсем, çул çинче илсе çӳремели приборсем тата ытти çавăн йышши йапаласем нумай тухмала,— вĕсене тутăхман хурçăран тунă.

Главрезинăн Йарослављри комбиначĕ утиљрен калушсем тума тытăннă. Савăт халех ĕнтĕ кунне 800 мăшăр калуш кăларать. Халĕ унта калушсем тăвакан цеха çĕнĕ машинсем лартаççĕ. Вара калушсем туса кăларасси ӳсмеле. Мускаври „Каучук" савăт килхуçи хĕрарăмĕсем валљи резин сумкăсем, сапунсем т. ыт. туса кăларать.

(ТАСС).

Йеврейсене хирĕç погромсем тупи Германи халăхне çиллентерет

Нойабĕрĕн 15-мĕшĕнче йут çĕршывсенчи хаçатсен Берлинри корреспонденчĕсем почтă урлă çырусем илнĕ. Вăл çырусен ăшĕнче „обшчĕствăн пĕтĕм сийĕсен представителĕсен" (вăл шута офицерсем тата фашисла партин хăшпĕр членĕсем те кĕреççĕ) нойабĕрĕн 13-мĕшĕнче вăрттăн пулнă канашлăвĕ чĕнсе калани пулнă. Чĕнсе каланинче çапла çырнă: епĕр, канашлăва пухăннисем, хаљхи вăхăтра Германире пулса пыракан событисемшĕн вăтанса хĕрелетпĕр. Йеврейсене хирĕç погромсем тунипе Германи халăхĕ сыхăнса тăмасть, вăл çав погромсене сивлет. Чĕнсе каланинче çакна кăтартса пана: фашиссен пуçлăхĕсем, погромсем вĕсем Германи халăхĕ йеврейсене курайманран пулаççĕ, тени йăлтах суйа, çапла калани Германи халăхĕн чăн-чăн туйăмĕсемпе нимĕнле те сыхăнса тăмасть, тенĕ.

Парижран пĕлтернĕ тăрăх, Германи хулисенчи халăх йеврейсене погромсенчен хӳтĕлет. Бреслављре, Ганновĕрта, Гамбургра тата ытти хуласенче те салтаксен тата хулари çынсен ушкăнĕсем штурмовиксем хĕнекен йеврейсене хӳтĕленĕ. Нумай вырăнсенче пысăк тытăçусем пулса иртнĕ, тытăçусем вăхăтĕнче рабочисем, салтаксем тата штурмовиксем вуншарăн аманса пĕтнĕ.

(ТАСС).

Германири йеврейсене хирĕçле погромсем

Англи хаçачĕсем пĕлтереççĕ: Германире йеврейсене хирĕçле погромсем тума хаљ те чарăнман. Фашисла бандăсĕн тискер ĕçĕсем Германи халăхне тарăхтараççĕ. „Таймс" хаçат пĕлтернĕ тăрăх, йеврейсене хирĕç погромсем тунине хирĕç протесленĕшĕн нумай „арийĕçсене" арĕсленĕ.

Англири „Дейли експрес" хаçатăн Берлинри корреспонденчĕ çапла çырать: „Фашисла бандăсен тискер ĕçĕсем массăсене çакăн пек вăйлăн çиллентерсе тарăхтарнине епĕ Гитлĕр режимĕ пуçланнăранпа та курман-ха".

(ТАСС).

Фашисла погромшчиксене хирĕç

Германи фашисăмĕн тискер ĕçĕсем пирки тарăхса хирĕçесси пĕтĕм тĕнчипе ӳссе пырать.

Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенчи массăлă организацисем Германипе дипломати тата суту-илӳ йĕнĕпе çыхăну тытма пăрахас пулать, тесе ыйтаççĕ. Çавăн пек Нйу-Йоркра „Мирпе демократи лиги" пухнă вунă пинлĕ митинг Германине тавар йама чарасси çинчен резољуци йышăннă.

Колумбире (Кăнтăр Америкă) депутатсен палати Германи фашисăмĕ йеврейсене хирĕç пуçарса йанă тискер кампанине протеслесе резољуци йышăннă. Германире йеврейсене хирĕç тунă погромсем пирки протес парас кампани Чилире те анлăн сарăлнă.

Урăх çĕршыв хаçачĕсем çакна паллă тăваççĕ: Германире йеврейсене погром тăвассине Германи правителстви хăй организациленĕ, вăл погромсене штурмовиксем тăваççĕ. Германи халăхĕ погрома хутшăнмасть.

(ТАСС).

Германи хăйĕн посолне Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенчен чĕнсе илнĕ

Темиçе кун кайарах, Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен Германири посолне — Виљсона Германирен Вашингтона чĕнсе илнĕ. Виљсона Германире ĕçсем мĕнле тăни çинчен, уйрăмăн—йеврейсене погром туни çинчен доклад тума чĕннĕ пулнă.

Урăх çĕршывсен хаçачĕсем çак факта—Германи фашисĕсем йеврейсене хирĕç погром пуçарса йанине протеслени пулать, тесе çырчĕç.

Халĕ Лондăнран çапла пĕлтереççĕ: Германи Вашингтонри посолне Берлина „доклад тума" чĕнсе илнĕ.

(ТАСС).

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Шаљси провинцин (Çурçĕр Китай) çурçĕр йенчи пайĕнче йулашки ернере Китай çарĕсен чаçĕсем партизансемпе пĕрле Йапонин Датун-Пучжоу чукунçулĕ тăрăх вырнаçса тăракан гарнизонĕсем çине темиçе хут та атакă тунă. Партизансем станцăсенчен пĕрне йапонĕçсенчен туртса илнĕ. Çапăçура йапонĕçсен 117 çын вилнĕ тата нумай çын аманнă. Провинцин кăнтăр пайĕнче Китай çарĕсем Йапонин Йуйçан хулинче вырнаçса тăракан отрйадне хупăрласа илнĕ. Унта вăйлă çапăçусем пыраççĕ.

Китай çарĕсен Кăнтăр Китайра кĕрешекен чи пысăк вăйĕсем Кантонран 30 километртра çапăçаççĕ, Китайăн малти чаçĕсем хула хĕррисем патнех çитнĕ. Цунхуа патĕнчи çапăçусенче (Кантонран çурçĕр-хĕвелтухăç йенче) Китай çарĕсем йапонĕçсенчен 1.000 винтовкă, 9 танк, 20 тупă тата 10 пулемет туртса илнĕ. Цунхуаран йапонĕçсене хĕссе кăларнă.

**

Кăнтăр Китайра Китай çарĕсем, пысăк вăй илнĕ хыççăн, ăнăçлăн Кантон çине контрнаступлени туса пыраççĕ. Йапони позицийĕсене пуринчен те хытăрах Кантон—Хаљкоу чукунçулĕ йĕнчен тапăнса пыракан Китай чаçĕсем çĕмĕреççĕ. Çапăçусем Кантон çывăхĕнче темиçе вырăнта пыраççĕ. Пĕр вăхăтрах Китай çарĕн тепĕр пайĕ Кантон çине кăнтăртан, Шуљде йенчен, тапăнать. Кантон хули хĕрривчи вырăнсенче йапонĕçсемпе Китай çарĕн уйрăм утлă çар отрйачĕсем хушшинче хайар çапăçусем пыраççĕ.

Тĕп Китайра Китай çарĕсем татăклăн контратакă туса йапонĕçсене Çаљнин хулинчен (Учанран 65 километр кăнтăр йеннерех) хăваласа кăларнă. Çаљнина йышăннă хыççăн, китайĕçсем Кантон—Хаљкоу чукунçулĕ тăрăх кăнтăр йенеле пыракан Йапони чаçĕсен тылне кĕнĕ.

Хубей провинцин кăнтăр-хĕвелтухăç пайĕнче тăракан Китай çарĕн чаçĕсем Йапони позицийĕсем çине флангран атакă тума пуçланă. Çапла тунипе вĕсем йапонĕçсем çĕршыв ăшне шалала кĕрсе пырассине чарса лартма шутлаççĕ.

(ТАСС).

„Епĕр татăклăнах çĕнтерĕпĕр"

Ли Цзун-жен генерал калани

Китай хаçачĕсенче Китай çарĕн руководителĕсенчен пĕри — Ли Цзун-жен генерал Китайри ирĕклĕхшĕн пыракан вăрçăн çĕнĕ тапхăрĕ çинчен, Китай çарĕсем Кантонпа Ухаљран тухса кайнă хыççăнхи тапхăр çинчен мĕн каланине пичетлесе кăларнă.

Хаљхи вăхăтра,—тенĕ Ли Цзун-жен,—пĕтĕм Китай халăхĕ вăрама тăсăлакан вăрçă малала мĕнле пуласси çине пăхать. Хамăрăн вăрçăра епĕр тăшман вăйне хавшатса пĕтересси çине шанатпăр. Хамăрăн вăйсене ӳстерсе пырса, алла хĕçпăшал тытса тăшмана хирĕç кĕрешессине вăйлăлатса епĕр татăклă çĕнтерӳ тума пултаратпăр. Йапонин стратегилĕ ресурсĕсем кунсеренех пĕтсе пыраççĕ. Кашни пĕр кун вăрçнийĕх ăна йăлтах ишĕлсе анасси патне çывхартса пырать.

Хăшпĕрисем, тĕнчери державăсем Китайа Чехословакине хĕснĕ пек хĕссен Китайа тăшманпа килĕшме, ăна пăхăнма пултарать, тесе шухăшлаççĕ. Ку вăл пулас çук. Китай Чехословаки мар, ăна мĕнле условисемпе пурăнмалине ытти çĕршывсем кăтартса параймĕç. Китай тăшмана хирĕçхăй пуçаравĕпе хĕçпăшал тытса çапăçать, вăл хăй никама пăхăнмасăр пурнассишĕн кĕрешет".

(ТАСС).

А. И. ТЕЉАШОВ—Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителствинчи механичĕски маçтерскойĕнче ĕçлекен сверловшчик-стаханăвĕц, нормăна 170 проц. тултарать.

Скоттсборо узникĕсен ĕçĕ

Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенчи Алабама штат кĕпĕрнатăрĕ негр çамрăкĕсене — Скоттсборо тĕрминче ларакан 5 çынна кăçару пама килĕшмен.

Негр çамрăкĕсене — 9 çынна „шурӳтлĕ икĕ хĕр çине тапăннă" тесе пуçарса йанă суйа ĕç 1931 çултанпа пырать. Тĕнчери общчественнăç шухăшĕ хĕснипе 1937 çулта айăплана кансенчен тăват тăшне ирĕке кăларнă пулнă. Айăпланакансенчен пĕрне—Норриса вĕлермеле тунă. Кăçал Норриса вĕлерес вырăнне ĕмĕрлĕхе пуç йамала тунă. Ыттисене 20—99 çул хушши тĕрмере хупса усрамала тунă.

(ТАСС).

Йапонире ĕç условийĕсем начарланса, ĕççĕр тăрса йулнисен шучĕ ӳссе пырать

Китайа хирĕçле вăрçă вăрăма тăсăлса кайнă май, Йапонири рабочисен ĕç условийĕсем пит начарланса кайнă: ĕç кунĕ вăрăмланнă, ĕççĕр тăрса йулнисен шучĕ ӳссе пырать.

Рабочисене пит йăвăр експлоатацилени пе ĕçре аманакансен шучĕ ӳссе пырать, çапла, сăмахран, 1938 çулти пĕрремĕш сурçул хушшинче Токиори (Йапони столици) хапрăксемпе савăтсенче 6.951 çын йăвăр аманнă.

Йапонири чылай предприйатисем, куллен кирлĕ таварсем туса кăларакан скерсем, чĕртавăр çуккипе хупăнаççĕ. Çакна пула ĕнтĕ йулашки пĕр уйăх хушшинче 25 пин рабочи ĕççĕр тăрса йулнă.

(ТАСС).

Пољшăри фашисла террор

Варшавăри округ судĕнче 26 çыннăн политикăлă пысăк процесĕ пуçланнă, вĕсене коммунисла ĕçсем тунăшăн тесе айăплаççĕ. Белостокра трибунал 26 çынна коммунисла ĕçсем тунăшăн тесе айăпласа, кашнинех 3—12-шер çул хушши тĕрмере хупса усрамала тунă.

(ТАСС).

Забайкаљйере ĕçлеме йулаççĕ

ПСК(б)П Чита обкомĕ, нумай вăхăтлăх отпуска кайакан красноармейĕçсене Забайкаљйере ĕçлеме йулма чĕннĕ. Обком чĕнсе каланине пограничниксем чĕререн йышăнаççĕ. Войенком Зйакин йулташ ĕçлекен чаçре красноармейĕçсенчен нумайăшĕ Забайкаљйере ĕçлеме йулма килĕшнĕ. Гуçковпа Першин йулташсем хăйсен зайавленийĕсенче çыраççĕ:

„Чикĕри пурнăç пире сыхăлăхла пулма вĕрентрĕ. Мирлĕ строителствă ĕçне куççан епĕр тӳрĕ ĕçлеме, ударниксемпе стаханăвĕçсен малти речĕсенче пулма сăмах паратпăр. Епĕр кирек хăш минутра та çĕнĕрен пăттăр пограничниксен ретне тăрса, вĕсемпе пĕрле тăшман кирек ăçтан килсен те ăна çĕмĕрме хатĕр".

(ТАСС).

ПАРТИ ВĔРЕНТĔВĔН ÇУРЧĔ ПСК(б)П ИСТОРИНЕ ВĔРЕНМЕ ПУЛĂШАТЬ

Петрозаводскра, ПСК(б)П Обкомĕ çумĕнчи парти вĕрентĕвĕн çуртĕнче ПСК(б)П Историне хăйсем тĕллĕн вĕренекенсене валљи „Развитие капитализма в России" темăпа пĕрремĕш лекци пулса иртнĕ. Вăл лекцине итлеме 50 çын пухăннă. Вĕсенчен чылайĕшĕ—педагогсем тата хулари предприйатисенчи специалиссем.

Нойабĕр уйăхĕнче тата икĕ лекци иртерме палăртнă.

Кусемсĕр пуçне, парти вĕрентĕвĕн çурчĕ предприйатисемпе учрежденисенче парти историйĕ çинчен лекцисем иртерессине те организацилет. Унта кунта пĕрре Маркс, Енгелљс, Ленин, Сталин произведенийĕсене вĕренекенсем валљи консуљтацисем туса иртереççĕ.

(ТАСС).

Çуракине хатĕрленеççĕ

ИЕЛЧЕК. Турханти „Звезда" колхоз кĕраки туса пĕтернĕ хыççăнах çитес çуракине хатĕрленме тытăннă. Колхоз кĕрхи çĕртме планне пĕтĕмпех тултарнă. Çитес çуракинче акмалăх кирлĕ таранах суртлă тата пысăк пахалăхлă вăрлăх уйăрса хунă. Çуракинче ĕçлемели йалхуçалăх машинĕсене сарайне пуçтарса лартнă, çусамалисене йусаттарнă.

Н. Фомин.

Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (большевиксен) Партин

ИСТОРИЙĔ

ПСК(б)П Тĕпкомĕн Комиççийĕ редакциленĕ. **КĔСКЕ КУРС.** ПСК(б)П Тĕпкомĕ ырланă. 1938 ç.

IX сыпăкăн йулашки

5. Совет Сойузĕ хуçалăха ура çине тăратнă тапхăр пĕтнĕ тĕле. Социалисăм строитĕлстви çинчен тата пирĕн çĕршывра социалисăм çĕнтересси çинчен тăнă ыйту. Зиновйевăн-Каменевăн „çĕнĕ оппозицийĕ". Партин XIV-мĕш сйесĕ. Çĕршыва социалисăмла индустрилесси патне çул тытни.

Большевиксен партийĕпе рабочи клас економикăн çĕнĕ политики тăрăх тăвата çул ытла çине тăрсах ĕçлесе пынă. Халăх хуçалăхне ура çине тăратас тĕлĕшпе паттăрăн пулса пынă ĕç вĕçне çитсе пынă. Совет Сойузĕн хуçалăхпа политикăлă вăй-хăвачĕ ытларах та ытларах ӳссе пынă.

Çав вăхăт тĕлне тĕнчери ларутăру улшăннă. Империалисăмла вăрçă хыççăн капиталисăм массăсен пирвайхи хĕснине хирĕç тăрса тытăнса йулнă. Германире, Италире, Болгарире, Польшăра тата ытти чылай çĕршывсенче революцилĕ йухăма пусарнă. Çакна тума буржуазине социал-демократла соглашатĕлле партисен çулпуçĕсем пулăшнă. Революци вăхăтлăха чака пуçланă. Хĕвеланăç Йевропăра капиталисăм вăхăтлăха, кăштах стабилизациленме,— унăн позицийĕсем кăштах тĕрекленме пуçланă. Анчах та капиталисăм стабилизациленни капиталисăмлă обшчĕствăна турткаласа çуркалакан тĕп хирĕçӳсене пĕтереймен. Йалтах урăхла: капиталисăм кăштах стабилизациленни рабочисемпе капиталиссем хушшинчи, империалисăмпа колонилĕ халăхсем хушшинчи, тĕрлĕ çĕршывсен империалисăмла групписем хушшинчи хирĕçӳсене вăйлатна. Капиталисăм стабилизациленни çĕнĕрен хирĕçӳсем сиксе тухассине, капиталисăм çĕршывĕсенче çĕнĕ кризиссем пулассине хатĕрлесе пынă.

Капиталисăм стабилизациленнипе йунашарах Совет Сойузĕ те стабилизациленсе пынă. Анчах та çав икĕ стабилизаци пĕр-пĕринчен тĕпренех уйăрăлса тăнă. Капиталисăм стабилизациленни капиталисăмăн çĕнĕ кризисĕ пулассине пĕлтерсе тăнă. Совет Сойузĕ стабилизациленни социалисăм çĕршывĕн хуçалăхлă тата политикăлă вăй-хăвачĕ çĕнĕ ӳсĕм тунине пĕлтерсе тăнă.

Хĕвеланăçĕнче революцине парăнтарнă пулсан та, Совет Сойузĕн тĕнчери лару-тăрăвĕ, чăнах та, пĕчĕкрех хăвăртлăхсемпе пулин те, çапах та тĕрекленсе пынă.

1922 çулта Совет Сойузне пĕтĕм тĕнчери економикăлă конференцине, Итали хулине—Генуйана чĕннĕ. Генуйари конференцире капиталисăм çĕршывĕсенче революци парăннипе хавасланнă империалисăмла правитĕлствăсем, Советсен Республикине, ку хутра дипломатилĕ формăпа, çĕнĕрен хĕстерме хăтланса пăхнă. Империалиссем Совет çĕршывĕ умне сĕмсĕр требованисем лартнă. Вĕсем Октябĕр революцийĕ национализациленĕ хапрăксемпе савăтсене йут çĕршыв капиталисĕсене кайала тавăрса пама требовани лартнă, патша правитĕлствин парăмĕсене пурне те тӳлеме требовани лартнă. Çав условисемпе империалисăмла государствăсем Совет государствине пысăк мар займсем пама пулнă.

Совет Сойузĕ çав требованисене йышăнман.

Генуйари конференци результатсем паман.

1923 çулта Англин йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Керзон ультиматум парса Совет Сойузне çĕнĕ интервенципе хăратнине те çавăн пекех тивĕçлĕ отпор панă.

Совет влаçĕн çирĕплĕхне хыпашласа пĕлсе, унăн тĕреклĕхне ĕненсе çитсе, капиталисăмлă государствăсем пирĕн çĕршывпа пĕрин хыççăн тепри çĕнĕрен дипломатилĕ çыхăнусем тăва пуçланă. 1924 çул хушшинче Англипе, Франципе, Йапонипе, Италипе дипломатилĕ çыхăнусем туса хунă.

Паллă пулнă, Совет çĕршывĕ сывлăш çавăрса илмели пĕрпĕтĕм тапхăр кĕрешсе илме пултарнă.

Лару-тăру çĕршыв ăшĕнче те улшăннă. Большевиксен партийĕ йертсе пыракан рабочисемпе хресченсем хăйсене шеллемесĕр ĕçлени хăйĕн çимĕçĕсене панă. Халăх хуçалăхĕ хăвăрт ӳссе пыни куç умĕнчех пулнă. 1924—25 хуçалăхлă çулсенче йалхуçалăхĕ вăрçăчченхи виçене çывхарса пынă, вăл вăрçăчченхи виçен 87 процентне ӳссе çитнĕ. ССР Сойузĕн шултăра промышлĕннăçĕ 1925 çулта вăрçăчченхи промышлĕннăç продукцин тăвата пайĕнчен виçĕ пайне йахăн панă. 1924—25 çулта ĕнтĕ Совет çĕршывĕ капиталънăй строитĕлствăна 385 мĕлйун тенкĕ укçа хывма пултарнă. Çĕршыва електрификацилес план ăнăçлăн пурнăça кĕрсе пынă. Халăх хуçалăхĕнче социалисăмăн командлă позицийĕсем çирĕпленсе пынă. Промышлĕннăçра тата суту-илӳре уйрăм çынсен капиталне хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе пысăк çитĕнӳсем тунă.

Хуçалăх çĕкленни рабочисемпе хресченсен пурнăçне малала лайăхлатса пынă. Рабочи клас пысăк хăвăртлăхпа ӳссе пынă. Ĕç укçи ӳснĕ. Ĕç тухăçлăхĕ çĕкленнĕ. Хресченсен материальнăй пурнăçĕ чылайах лайăхланнă. Рабочисемпе хресченсен государстви 1924—25 çулта вăйсăр пурăнакан хресченсене пулăшма 290 мĕлйун тенкĕ таран укçа пама пултарнă. Рабочисемпе хресченсен пурнăçĕ лайăхланнă никĕс çинче массăсен политикăлă активлăхĕ вăйлăн ӳснĕ. Пролетариат диктатури çирĕпленнĕ. Большевиксен партин авторитечĕпе влийанийĕ ӳснĕ.

Халăх хуçалăхне ура çине тăратас ĕç вĕçне çитсе пынă. Анчах Советсен çĕршывне, социалисăм туса пыракан çĕршыва, хуçалăха ахаль кăна ура çине тăратни, ахаль кăна вăрçăчченхи виçене çитни çителĕклĕ пулман. Вăрçăчченхи виçе вăл—кайа йулнă çĕршыв виçи пулнă. Малала каймала пулнă. Совет государстви сывлăш çаварма кĕрешсе илнĕ вăрăм вăхăт строитĕлствă ĕçне малала туса пыма май панă.

Анчах та кунта малашлăх çинчен, пирĕн аталану, пирĕн строитĕлствă характерĕ çинчен тăракан ыйту, Совет Сойузĕнче социалисăмăн кунçулĕ çинчен тăракан ыйту пĕтĕм вăйпа тухса тăнă. Совет Сойузĕнче хуçалăх строитĕлствине мĕнле çулпа илсе пымала, социалисăм патнелле-и, йе мĕнле те пулин урăх çулпа? Епĕр социалисăмла хуçалăх туса хумала-и тата туса хума пултаратпăр-и, йе пире урăх, капиталисăмлă хуçалăх валли çĕре тислĕкпе çемçетсе хума пӳрнĕ-и? ССР Сойузĕнче, пĕтĕмĕшпе илсен, социалисăмлă хуçалăх туса хума пулать-и, тата туса хума пулать пулсан, ăна капиталисăмла çĕршывсенче революци пуласси вăраха йулсан тата капиталисăм стабилизациленнĕ вăхăтра тума пулать-и? Çĕршывра социалисăм вăйĕсене пур майсемпе те çирĕплетсе тата ӳстерсе, унпа пĕрлех халлĕхе капиталисăма та кăштах ӳсме май паракан економикăн çĕнĕ политикин çулĕсемпе пырса социалисăмла хуçалăх туса хума пулать-и? Мĕнле туса пымала халăхăн социалисăмла хуçалăхне, хăш вĕçĕнчен пуçламала çав строитĕлствăна?

Çак ыйтусем пурте хуçалăха ура çине тăратас тапхăр пĕтнĕ тĕле ĕнтĕ парти умне теорилĕ ыйтусем пулса мар, практика ыйтăвĕсем пулса, хуçалăх строитĕлствин кулленхи ыйтăвĕсем пулса, тухса тăнă.

Промышлĕннăç тата йалхуçалăх строитĕлствине туса пыракан пирĕн парти тата хуçалăх работникĕсем, çавăн пекех тата пĕтĕм халăх—ĕçе ăçта илсе пымалине,—социалисăм патне-и, йе капиталисăм патне илсе пымалине пĕлсе тăччĕр тесе, çав ыйтусем çине тӳрĕ те уçăмлă ответсем пама кирлĕ пулнă.

Çак ыйтусем çине уçăмлă ответсем памасăр пирĕн строитĕлствă тĕлĕшĕнчи практикăлă ĕç малашнехине пĕлмесĕр ĕçлени, суккăрăн ĕçлени, усăсăр ĕçлени пулнă пулĕччĕ.

Çав мĕн пур ыйтусем çине парти уçăмлă та паллă ответсем панă.

Çапла, тенĕ парти, пирĕн çĕршывра социалисăм туса хума пулать, туса хумала та, мĕншĕн тесен пирĕн социалисăмла хуçалăх туса хума, туллин социалисăмла обшчĕствă туса хума кирлисем пурте пур. 1917 çулта рабочи клас капиталисăма политикă тĕлĕшĕнчен çĕнтерне, хăйĕн политикăлă диктатурине туса хунă. Çав вăхăтран пуçласа Совет влаçĕ капиталисăмăн хуçалăхлă вăйхăватне çĕмĕрсе тăкас тата халăхăн социалисăмла хуçалăхне туса хума условисем тăвас тесе пур ĕçсене те туса пынă. Капиталиссене тата помешчиксене експроприацилени; çĕре, хапрăксене, савăтсене, çулйĕрсене, банксене пĕтĕм халăх харпăрлăхĕ туса хуни; економикăн çĕнĕ политикине ĕçе кĕртсе пыни; государствăн социалисăмла промышленнăçне туса пыни; Ленинăн кооперативлă планне ĕçе кĕртсе пыни—çакăн пек пулнă çав ĕçсем. Халĕ ĕнтĕ тĕп задача: пĕтĕм çĕршыв тăрăх çĕнĕ, социалисăмла хуçалăх строитĕлствине сарса йарассинче тата çапла майпа капиталисăма економикă тĕлĕшĕнчен те тĕппипех пĕтерсе лартассинче пулса тăрать. Пирĕн пĕтĕм практикăлă ĕç, пирĕн пĕтĕм ĕçсем çав тĕп задача пурнăça кĕртессине пăхăнса тăмала. Рабочи клас çакна тума пултарать, тата вăл ăна тăвать те. Çав пит те пысăк задачăна пурнăça кĕртме çĕршыва индустрилессинчен пуçламала. Çĕршыва социалисăмла индустрилесси — çавăн пек ĕнтĕ халăхăн социалисăмлă хуçалăх строитĕлствине анлăн сарса йама тытăнмали тĕп сыпăк. Хĕвеланăçĕнче революци пуласси вăраха тăсăлни те, советлă мар çĕршывсенче капиталисăм кăштах çирĕпленни те епĕр малала — социалисăм патнелле пырассине чарса лартма пултараймассĕ. Економикăн çĕнĕ политики çак ĕçе çăмăллатма çеç пултарать, мĕншĕн тесен ăна парти пирĕн халăх хуçалăхĕн социалисăмлă никĕсне тăвас ĕçе çăмăллатма тунă та.

Çапла ответленĕ парти пирĕн çĕршывра социалисăм строитĕлстви çĕнтерессп çинчен тăнă ыйту çине.

Анчах та социалисăм пĕр çĕршывра çĕнтерес ыйту кунпах пур йенчен те тĕпленсе çитменнине парти пĕлсе тăнă. ССР Сойузĕнче социалисăм туса хуни етемлĕх историнче чи аслă çаврăну туни тата ССР Сойузĕнчи рабочи класпа хресченсем пĕтĕм тĕнчипе паллă историлĕ çĕнтерӳ туни пулса тăрать. Анчах вăл çапах та ССР Сойузĕн шалти ĕçĕ пулса тăрать тата вăл социалисăм çĕнтерес ыйтăвăн пĕр пайĕ çеç пулать. Ыйтăвăн тепĕр пайĕ вăл—унăн пĕтĕм тĕнчелĕ йенĕ пулса тăрать. Социалисăм пĕр çĕршывра çĕнтерессин положенине никĕслесе парса, Сталин йулташ çав ыйтăван икĕ йенне—шалти тата пĕтĕм тĕнчелĕ йенне,—уйăрса илмеле, тесе пĕрре çеç мар кăтартса панă. Ыйтăван шалти йенне, урăхла каласан, çĕршыв ăшĕнче классем пĕр-пĕринпе хутшăнса тăнине илсен, ССР Сойузĕнчи рабочи класпа хресченсем вара хăйсен буржуазине економикă тĕлĕшĕнчен пĕтĕмпех çĕнтерсе, тулли социалисăмла обшчĕства туса хума пултараççĕ. Анчах та ыйтăвăн тата пĕтĕм тĕнчелĕ йенĕ, урăхла каласан, тулашри çыхăнусен йенĕ, Совет çĕршывĕпе капиталисăмлă çĕршывсем хушшинчи çыхăнусен йенĕ, совет стройне кураймасăр Совет çĕршывне хирĕç çĕнĕ хĕçпăшаллă интервенци тума, ССР Сойузĕнче капиталисăма кайала тавăрма хăтланса пăхма сăлтав шыракан пĕтĕм тĕнчери буржуазипе Совет халăхĕ хушшинчи çыхăнусен йенĕ пур. ССР Сойузĕ халлĕхе пĕртен-пĕр социалисăмлă çĕршыв пулса тăрать пулсан вара, тата ытти çĕршывсем капиталисăмла çĕршывах пулса йулаççĕ пулсан, апла пулсан вара ССР Сойузĕ тавра капиталисăмлă интервенци хăрушлăхне çуратса тăракан капиталисăмлă йĕритавралăх малала та йулать. Паллах, капиталисăмлă йĕритавралăх пур чухне, капиталисăмлă интервенци хăрушлăхĕ те пулать. Совет халăхĕ çав тулашри хăрушлăха, ССР Сойузне хирĕç капиталисăмлă интервенци пулас хăрушлăха пĕр хăйĕн вăйĕсемпе çеç пĕтерсе хума пултарать-и? Çук, пултараймасть. Пултараймасть, мĕншĕн тесен капиталисăмлă интервенци хăрушлăхне пĕтерме капиталисăмлă йĕритавралăха пĕтерни кирлĕ, капиталисăмлă йĕритавралăха вара сахалтан та темиçе çĕршывра çĕнтерӳлĕ пролетарилĕ революци пулсан çеç пĕтерме пулать. Анчах кунтан акă мĕн тухса тăрать: ССР Сойузĕнче социалисăм çĕнтерни, хуçалăхăн капиталисăмлă системине пĕтерсе хуçалăхăн социалисăмлă системине туса хунине пĕлтерекен çĕнтерӳ, вăл çапах та татăклă çĕнтерӳ тесе шутланма пултараймасть, мĕншĕн тесен йут çĕршывсем хĕçпăшаллă интервенци тăвас тата капиталисăма кайала тавăрма хăтланса пăхас хăрушлăх çаплах йулать, мĕншĕн тесен социалисăм çĕршывĕ çавăн пек хăлăхан гарантипленнĕ. Йут çĕршывсен капиталисăмлă интервенци хăрушлăхне пĕтерес тесен, капиталисăмлă йĕритавралăха пĕтерес пулать.

Паллах, Совет халăхĕпе унăн Хĕрлĕ çарĕ Совет влаçĕ тĕрĕс политика тытса пынă чухне, 1918—1920 çулсенче капиталиссен пирвайхи интервенцине отпор панă пекех, йутçĕршывсен капиталисăмлă çĕнĕ интервенцине те тивĕçлĕ отпор пама пултарĕç. Анчах та ку вăл çакăнпа капиталисăмлă çĕнĕ интервенцисен хăрушлăхне пĕтернине пĕлтермест-ха. Пĕрремĕш интервенцине çĕмĕрсе тăкни çĕнĕ интервенци хăрушлăхне пĕтермерĕ, мĕншĕн тесен интервенци хăрушлăхĕн çăлкуçĕ—капиталисăмлă йĕритавралăх—малала та йулать. Капиталисăмлă йĕритавралăх малала та йулать пулсан, çĕнĕ интервенцине çĕмĕрсе тăкни те интервенци хăрушлăхне пĕтермест.

Çакăнтан акă мĕн тухса тăрать: капиталисăмлă çĕршывсенче пролетарилĕ революци çĕнтересси ССР Сойузĕнчи ĕççыннисен тăванла интересĕ пулса тăрать.

Çавăн пек пулнă парти установки пирĕн çĕршывра социалисăм çĕнтерес ыйту тĕлĕшпе.

Тĕп Комитет çав установкăна партин пулас XIV-мĕш конференцинче сӳтсе-йавма, ăна парти установки партин пур членĕсемшĕн те обйазатĕлнă йĕркепе пурнăçа кĕртсе пымали саккунĕ пек туса ырласа йышăнма требовани лартнă.

Партин çав установки оппозиционерсене пуçран çапнă пек хăратса пăрахнă. Вĕсем чи малтан акă мĕншĕн хăраса ӳкнĕ: парти çав установкăна конкретлă, практикăлă характер панă, ăна çĕршыва социалисăмла индустрилес практикăлă планпа çыхăнтарнă тата ăна парти саккунĕн формине, XIV-мĕш партконференцин парти членĕсемшĕн пуриншĕн те обйазатĕлнă йĕркепе пурнăçа кĕртсе пымали резолюцийĕн формине пама требовани лартнă.

Троцкиссем парти установкине хирĕç тухса, хăйсен меньшевикла „перманентлă революци теорине" кăларса тăратнă, çав теорине марксисăмран кулса çеç марксисла теори теме пулнă, вăл теори ССР Сойузĕнче социалисăм строитĕлстви çĕнтерме пултарассине йышăнман.

Бухаринĕцсем парти установкине хирĕç тӳрех тухма хăйман. Анчах вĕсем çапах та парти установкине хирĕç хăйсен: буржуази социалисăма мирлĕн ӳссе кĕрет, текен „теорине" майпен кăларса тăратса пынă, ун çумне „çĕнĕ" лозунг—„Пуйанланăр" текен лозунг—хушнă. Бухаринĕцсен çапла пулса тухнă: социалисăм çĕнтерни буржуазине пĕтернине мар, ăна пăхса ӳстернине тата вăл пуйанланнине пĕлтерет.

Зиновйĕвпа Каменĕв пĕр вăхăтра: техникăпа економикă тĕлĕшĕнчен кайа йулнă пирки ССР Сойузĕнче социалисăм çĕнтерме пултараймасть, текен зайавленипе чăсăлса тухса пăхма хăтланнă, анчах кайран вĕсен ирĕксĕрех тĕм хыçне кайса пытанмала пулнă.

XIV-мĕш партконференци (1925 çулти апрел) уççăн тата вăрттăн кĕрешекен оппозиционерсен çак капитулянтла „теорийĕсене" пурне те сивлесе, партин ССР Сойузĕнче социалисăм çĕнтерес установкине çирĕплетнĕ, çав тĕлĕшпе тивĕçлĕ резолюци йышăннă.

Зиновйĕвпа Каменĕв, çтена çумне хĕссе хунăскерсем, çав резолюцишĕн сасăланă. Анчах та, вĕсем партин XIV-мĕш сйесĕнче „партине хирĕç çапăçма" шутласа, партине хирĕç кĕрешессине кайарах çеç хăварнине парти пĕлнĕ. Вĕсем Ленинградра хăйсене майлă çынсене пухса, „çĕнĕ оппозици" текенскерне тунă.

1925 çулти декабĕр уйăхĕнче партин XIV-мĕш сйесĕ уçăлнă.

Сйес парти ăшĕнчи йăвăр ларутăрура пулса пынă. Парти пуçлансa кайнăранпа пĕтĕм вăхăтра партин Ленинград делегацийĕ пек чи пысăк центр делегацийĕ хăйĕн Тĕп Комитетне хирĕç тухма хатĕрленни нихçан та пулман.

Сйесра ĕç тăвакан сасăпа 665 делегат, канашлакан сасăпа 641 делегат пулнă, вĕсене партин 673 пин членĕнчен тата 445 пин кандидатран суйласа йанă, урăхла каласан, делегатсен хисепĕ ун умĕнхи сйесринчен сахалтарах пулнă. Çав хисепре аслă шкулсемпе учрежденисен йачейкисенче тасату туса иртернин результачĕсем палăрнă, çав йачейкăсене партине хирĕçле елементсем кĕрсе тулнă пулнă.

Тĕп Комитетăн политикăлă отчотне Сталин йулташ туса панă. Вăл Совет Сойузĕн хуçалăхлă тата политикăлă вăйхăвачĕ ӳсни уçăмлă картинине кăтартса панă. Хуçалăхăн советлă системи маларах тăнине пула, промышлĕннăçа та, йалхуçалăхне те кĕске вăхăтрах ура çине тăратнă, вĕсем вăрçăчченхи виçене çывхарса пынă. Çавăн пек çитĕнӳсем тунă пулин те, ун çинче лăпланса лармала мар, тенĕ Сталин йулташ, мĕншĕн тесен çав çитĕнӳсем пирĕн çĕршыв çаплахха кайа йулнă, аграрлă çĕршыв пулса йулнă фактне пĕтерме пултарайман. Пĕтĕм продукцин виçĕ пайĕнчен икĕ пайне йалхуçалăхĕ парса тăнă, пĕр виççĕмĕш пайне кăна—промышлĕннăç парса тăнă. Парти умĕнче, тенĕ Сталин йулташ, пирĕн çĕршыва индустрилĕ çĕршыв, економикă тĕлĕшĕнчен капиталисăмлă çĕршывсене пăхăнман çĕршыв туса хурас ыйту пысăккăн тăрать. Çакна тума май пур, тата ăна тумала та. Çĕршыва социалисăмла индустрилессишĕн кĕрешесси, социалисăм çĕнтерессишĕн кĕрешесси партин тĕп задачи пулса тăрать.

„Пирĕн çĕршыва аграрлă çĕршывран индустрилĕ, кирлĕ оборудованине хăйĕн вăйĕсемпех туса кăларма пултаракан çĕршыв тумала—акă мĕнре пирĕн тĕп çулйĕрĕн тупсăмĕ, никĕсĕ", — тесе кăтартса панă Сталин йулташ.

Çĕршыва индустрилени çĕршыва хуçалăх тĕлĕшĕнчен никама пăхăнмасăр пурăнмала тунă, унăн оборонă пултарулăхне тĕреклетнĕ тата ССР Сойузĕнче социалисăм çĕнтерме кирлĕ условисене туса панă.

Партин тĕп çулйĕрне хирĕç зиновйĕвĕцсем тухнă. Социалисăмлă индустриализацин сталинла планне хирĕç зиновйĕвĕц Сокольникăв буржуалă плана, империалисăм акулĕсем хушшинче çӳрекен плана каларса таратна. Çав план тăрăх ССР Сойузĕ аграрлă çĕршыв, пуринчен ытла, чĕртавар тата продовольстви туса кăларакан, вĕсене урăх çĕршывсене сутса, унтан машинăсем кӳрсе тăракан çĕршыв, хăй машинăсем туман, тума та тивĕçлĕ мар çĕршыв пулса йулмала пулнă. 1925 çулти условисенче çав план ССР Сойузне промышлĕннăç тĕлĕшĕнчен аталаннă йут çĕршывсен аллине економикăлă пусмăрлăха кĕртсе ӳкермели план пек, капиталисăмлă çĕршывсен империалисла акулĕсемшĕн усăллăн ССР Сойузĕ промышлĕннăç тĕлĕшпе кайа йулнине çирĕплетсе хăвармали план пек курăнса тăнă.

Çав плана йышăнни пирĕн çĕршыва капиталисăм тĕнчин хӳринче сĕтĕрĕнсе пыракан вăйсăр, аграрлă, çĕрĕçлĕ çĕршыв туса хурассине, капиталисăмлă йĕритавралăх умĕнче ăна хĕçпăшалсăр тата вăйсăр тăратса хăварнине тата, йурăшки шутран, — ССР Сойузĕнчи социалисăм ĕçне тупăка хурса пытарассине пĕлтернĕ.

Сйес зиновйĕвĕцсен хуçалăх „планне" ССР Сойузне пусмăра кĕртсе ӳкермели план вырăнне хурса, питленĕ.

„Çĕнĕ оппозицине" çавăн пек хăтланни те: (Ленина хирĕçле пулса!) пирĕн государствăн промышлĕннăçĕ социалисăмлă промышлĕннăç пулмасть тени те, йе (кунта та Ленина хирĕçле пулса!) социалисăм строитĕлстви ĕçĕнче вăтам хресчен рабочи класăн сойузникĕ пулма пултараймасть тени те пулăшман.

„Çĕнĕ оппозици" çапла хăтланнисене сйес, вĕсене Ленина хирĕçле ĕç вырăнне хурса, питленĕ.

Сталин йулташ „çĕнĕ оппозицин" троцкисла-меньшевикла тупсăмне тăрă шыв çине кăларнă. Вăл: Зиновйĕвпа Каменĕв парти тăшманĕсен, хăй вăхăтĕнче Ленин вĕсене хирĕç пĕр шеллемесĕр кĕрешнĕ тăшмансен, йуррине çеç тепĕр хут йурланине кăтартса панă.

Зиновйĕвцсем вĕсем маскăпа начар витĕннĕ троцкиссем пулни паллă пулнă.

Сталин йулташ: партин чи кирлĕ задачи вăл—социалисăм строитĕлстви ĕçĕнче рабочи класпа вăтам хресченсем хушшинче çирĕп сойуз тăвасси пулса тăрать, тесе палăртса панă. Вăл ун чухне партире хресчен ыйтăвĕ тĕлĕшпе пулнă икĕ сулăнчăк çине, рабочи класпа вăтам хресченсен сойузĕн ĕçĕшĕн хăрушлăх пулса тăракан икĕ сулăнчăк çине кăтартса панă. Пĕрремĕш сулăнчăк—кулакла хăрушлăха хака хуманни тата ăна пĕчĕклетни, иккĕмĕш сулăнчăк—кулак умĕнче хăраса паникăна кĕрсе ӳкни тата вăтам хресчен ролĕне хак паманни. Хăш сулăнчăк сиенлĕрех тесе ыйтнине кура, Сталин йулташ ответленĕ: „Вĕсем иккĕшĕ те сийенлĕ, пĕрремĕше те, иккĕмĕшĕ те. Тата çав сулăнчăксем ӳссе кайсан, вĕсем партине пăсса йама тата пĕтерсе хума пултараççĕ. Телейа пула, пирĕн партире пĕрремĕш тата иккĕмĕш сулăнчăксене те касса татма пултаракан вăйсем пур".

Парти чăнах та „сулăхай" сулăнчăка та сылтăм сулăнчăка та çĕмĕрсе тăкнă тата касса татнă.

Хуçалăх строитĕлстви тăрăх пынă пренисен итогĕсене туса, парти XIV-мĕш сйесĕ оппозиционерсен капитулянтла планĕсене сирсе пăрахнă та хăйĕн чаплă решенинче çапла çырса хунă:

„Економикă строитĕлстви тĕлĕшпе сйес пирĕн çĕршывăн, пролетарилĕ диктатурă çĕршывĕн „тулли социалисăмлă обшчĕствă тума кирлисем пурте пур" (Ленин) тенине никĕсе хурать. Сйес ССР Сойузĕнче социалисăм строитĕлстви çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешесси пирĕн партин тĕп задачи пулса тăрать, тесе шутлать".

XIV-мĕш сйес партин çĕнĕ уставне çирĕплетнĕ.

XIV-мĕш сйесран пуçласа пирĕн партине Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (большевиксен) Партийĕ—ПСК(б)П теме пуçланă.

Зиновйĕвцĕсем, сйесра çĕмĕрсе тăкнăскерсем, партине пăхăнман. Вĕсем XIV-мĕш сйес решенийĕсене хирĕç кĕрешме пуçланă. XIV-мĕш сйес пулса иртсенех, Зиновйĕв комсомолăн Ленинград кĕпĕрне комитечĕн пухуне туса иртернĕ, кĕпĕрне комитечĕн çулти ушкăнне Зиновйĕв, Залуцкий, Бакайĕв, Йевдокимăв, Куклин, Сафарăв тата ытти двурушниксем партин ленинла Тĕпкомне кураймасăр тăмала туса вĕрентсе ӳстернĕ. Çав пухура комсомолăн Ленинград кĕпĕрнин комитечĕ ПССЛКС историнче нихçан пулман постановлени—партин XIV-мĕш сйесĕн решенийĕсене пăхăнас марри çинчен постановлени йышăннă.

Анчах Ленинград комсомолĕн Зиновйĕв майлă тăракан çийелти сийĕ Ленинградри комсомол массисен кăмăл-шухăшне пачах та палăртса тăман. Çавăнпа та ăна çăмăллăнах çĕмĕрсе тăкнă, комсомолăн Ленинград организацийĕ комсомолта часах хăйне тивĕçлĕ вырăн йышăннă.

XIV-мĕш сйес пĕтеспе Ленинграда сйес делегачĕсене—Молотăв, Кирăв, Ворошилăв, Калинин, Андрейĕв тата ытти йулташсене йанă. Ултавлă майсемпе мандатсем илнĕ Ленинград делегацийĕ сйесра преступнăй, большевисăма хирĕçле позици тытни çинчен партин Ленинградри организаци членĕсене ăнлантарса пымала пулнă. Сйес çинчен отчот итлекен пухусем тăвăллăн пулса иртнĕ. Ленинградра çĕнĕрен, васкавлă партконференци пухнă. Партин Ленинград организаци членĕсен чи пысăк масси (97 процентран ытла) партин XIV-мĕш сйес решенисене пĕтĕмпех ырланă тата партийе хирĕçле зиновйĕвла „çĕнĕ оппозицине" сивленĕ. „Çĕнĕ оппозици" ĕнтĕ ун чухнех çарсăр тăрса йулнă генералсем йĕверлĕ пулнă.

Ленинград большевикĕсем Ленин—Сталин партийĕн малти речĕсенче йулнă.

Партин XIV-мĕш сйесĕн ĕçĕсене итог туса Сталин йулташ çырнă:

„ПСК(б)П XIV-мĕш сйесĕн историлĕ пĕлтерĕшĕ çакăнта пулса тăрать: вăл çĕнĕ оппозицийăн йăнăшĕсене тымара çитичченех уççа кăтартма пултарчĕ, вăл ĕненменнине, нăйкăшнине айаккала илсе пăрахрĕ, социалисăмшăн малашнехи кĕрешӳ çулне уççăн та тĕплĕн палăртса хучĕ, партине çĕнтерӳ малашлăхне пачĕ, çапла тунипе вăл, пролетариата социалисăм строитĕлстви çĕнтерес ĕçе ĕненсе тăма никам çĕмĕрейми çирĕп шанчăкпа хĕçпăшаллантарчĕ" (Сталин, Вопросы ленинизма, стр. 150).

Кĕске вывăдсем

Халăх хуçалăхне ура çине тăратас тĕлĕшпе мирлĕн ĕçлеме куçнă çулсем большевиксен партин историнче чи ответлă тапхăрсенчен пĕри пулса тăрать. Йăвăр лару-тăру вăхăтĕнче парти вăрçăлă коммунисăмран економикăн çĕнĕ политики çине куçмали йăвăр çавранăва тума пултарнă. Парти рабочисемпе хресченсен сойузне економикăн çĕнĕ никĕсĕ çинче çирĕплетнĕ. Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузне туса хунă.

Економикăн çĕнĕ политики çулĕ çинче халăх хуçалăхне ура çине тăратас тĕлĕшпе татăкла çитĕнӳсем тунă. Советсен çĕршывĕ халăх хуçалăхне ура çине тăратас

Малали 3-мĕш страницăра

М А Л А Л И.

тапхăра анăçлăн утса тухнă, çĕнĕ тапхăра, çĕршыва индустрилес тапхăра куçма тытăннă.

Граждан вăрçинчен социализм строительствине мирлĕн туса пырас ĕçе куçасси, пуринчен ытла малтанхи вăхăтсенче, пысăк йăварлăхсемпе пулса пынă. Большевизм тăшманĕсем, ПСК(б)П ретĕнчи партийе хирĕçле елементсем, çав тапхăр хушшинче тăрашшипех ленинла партийе хирĕç хайарран кĕрешсе пынă. Çав партийе хирĕçле елементсен пуçĕнче Троцкий тăнă. Çав кĕрешÿре унпа пĕрле алĕççĕн пыракансем Каменев, Зиновьев, Бухарин пулнă. Оппозиционерсем Ленин вилнĕ хыççăн большевиксен парти речĕсене пăсса йама, партине çурса тăкма, ăна пирĕн ССР Сойузĕнче социализм çĕнтерессине ĕненмен шухăшлăх йертме шутланă. Тĕрĕссипе илсен, троцкиссем ССР Сойузĕнче çĕнĕ буржуазин политикăлă организаци, тепĕр парти—капитализмлă реставраци партийĕ тăвасшăн пулнă.

Парти Ленин йалавĕ айне тăрса, хайĕн ленинла Тĕпкомĕ тавра, Сталин йулташ тавра пĕтĕçрĕ, троцкиссене те, çавăн пекех тата вĕсен Ленинградри çĕнĕ тусĕсене —Зиновьевпа Каменевăн çĕнĕ оппозицине те, çĕмĕрсе тăкрĕ.

Вайсемпе средствăсем пухса, большевиксен партийĕ çĕршыва историлĕ çĕнĕ тапхăр патне—социализмлă индустриализаци тапхăрĕ патне илсе çитерчĕ.

(ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕн малали „Чăваш Коммунĕ“ хаçатăн çитес номĕрĕсенче пичетленет. IX-мĕш сыпăкăн пуçламĕшĕ нойабĕрĕн 15-мĕшпе 18-мĕшĕнче тухнă номĕрсенче пичетленнĕ).

Хула комитечĕн пулăшмала

Сочувствуйушчисем парти ретне ÿстермели резерв пулса тăраççĕ. Пуçламĕш парторганизацисен задачи—вĕсене политикăлă воспитани парасси, партин кулленхи ĕçне активлăн хутшăнтарасси пулат.

Спирт савăтĕнчи (Шупашкар) пуçламĕш парторганизаци çумĕнчи сочувствуйушчисен группинче 5 çын тăрат. Вĕсене парторганизаци коммуниссен уçă пухăвĕсене чĕнет, уйрăм порученисем парса партин кулленхи ĕçĕсене хутшăнтарат. Сочувствуйушчисенчен иккĕшĕ политграмăтăна, виççĕшĕ парти историне вĕренеççĕ. Унччен малтан вĕсем парти уставĕпе тата программипе паллашнă.

Гераçимăв йулташа пуçламĕш парторганизаци парти членĕн кандидатне илнĕ.

Сочувствуйушчисем производствăра та лайăх ĕçлеççĕ. Гераçимăв йулташ йертсе пыракан цех çулталăкри производствăлă плана Октябĕр уйавĕ тĕлне ытлашшипех пурнăçа кĕртнĕ.

Парторганизаци сочувствуйушчисене рабочисем хушшинче агитаци ĕçне тума, хаçат-журналсем вуласа пама кашнине уйрăм ĕç панă. Çапла, Платонăвă йулташ хăй ĕçлекен цехри рабочисене хаçатсем вуласа парат, калаçусем туса ирттерет. Вăл цехри çитменлĕхсем çинчен парторга пĕлтерет. Çтена хаçачĕ кăларнă çĕрте активлăн хутшăнса ĕçлет.

Партилĕ-политикăлă ĕçре ытти сочувствуйушчисем те активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. Гераçимăв йулташ завком председателĕнче, Савелйĕв йулташ Осоавиахим пуçламĕш организацин председателĕнче ĕçлет. Рукавишникăв йулташ механически цехри рабочисене хаçатсем вуласа парат, калаçусем туса ирттерет. Савелйĕв йулташа савăт дирекци цех начальникĕ турĕ.

Алексейĕвă йулташ партилĕ-политикăлă ĕçе çителĕксĕр хутшăннă. Вăл касхи сменăра ĕçленипе пухусене те вăхăтра çÿремест, политикăлă пĕлÿлĕхне ÿстерес тĕлĕшпе те сахал ĕçлет. Ку парторганизацин çитменлĕхĕ. Алексейĕвă йулташа вĕрентме куллен пулăшса пымала, партилĕ-политикăлă ĕçе активлăн хутшăнтармала.

Парторганизаци рабочисене, работницăсене сочувствуйушчисен ретне илес тĕлĕшпе халĕ те начар ĕçлет-ха. Савăтра 200 çын, вĕсенчен стахановецсем 94 çын, ударниксем 11. Анчах та вĕсене сочувствуйушчисен ретне илес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлени сахал.

Парторг Пегайĕвă йулташ çамрăк партработник, парторг пулса пĕрремĕш çул çеç ĕçлет. Ăна хула комитечĕн ĕçпе пулăшмала. Анчах та хула комитечĕ Пегайĕвă йулташа пулăшу памаст. Çакна пула, Пегайĕвă йулташ чылай чухне партилĕ-политикăлă ĕçе организациленĕ, сочувствуйушчисемпе ĕçленĕ чухне ăнланман ыйтусене тĕл пулат. Вăл хула комитетĕнчен пысăк пулăшу кĕтет.

Г. Сахалкин.

6 пин тенкĕ пулăшу илчĕ

Ишек йалсоветне кĕрекен Хураçырма йалĕнчи (Ишлей районĕ) Аннă Толбайĕвă 7 ача амăшĕ. Толбайĕвă кăçалхипе виççĕмĕш хут ĕнтĕ государствăран икшер пин тенкĕ пулăшу илчĕ.

Государствăран илнĕ укçапа Толбайĕвă хăйĕн ачисем вальли вĕренмели кĕнекесем, хут-кăрантăшсем тата кĕпе-тумтирсем, атă пушмаксем илсе панă.

Вăл çакăн пек телейлĕ те савăнăçлă пурнăç туса панăшăн Аслă çулпуçв Сталин йулташа тав тăват.

А. Наумăв.

Кабинетран тухмаççĕ

ЙЕТĔРНЕ. Комсомолăн Мăн Шемертенти пуçламĕш организацийĕ çамрăксене коммунисла воспитани парас тĕлĕшпе аван ĕçлесе пырат. Колхоз производствинче социализмлă ăмăртупа стахановла йухăма сарса йарас ĕçре комсомолецсем паллă вырăн йышăнса тăраççĕ. Комсомолецсем пуçарнипе колхозра 10 тĕрлĕ çтена хаçачĕ тухса тăрат.

Ку организаци иртнĕ çул районра пĕчĕк йышлă организацисенчен пĕри пулнă. Çамрăксем хушшинче лайăх ĕçлесе пынипе кăçал пысăк йышлă организаци пулса тăчĕ. Унта пурĕ 41 комсомолец (иртнĕ çул 4 çеç пулнă).

Кун пек аван ĕçлекен комсомол организацисем районра татах та пур. Анчах комсомол райкомĕнче ĕçлекенсем кабинетра ларса вăхăта ирттереççĕ, лайăх ĕçлекенсен опычĕ тăрах вĕрентсе, йулса пыракан организацисене малала кăларас тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Унтан та ытларах, комсомол райкомĕ пулăшса, йертсе пыман пирки, иртнĕ çулсенче аван ĕçлесе пынă организацисем хаљ чылай йапăх ĕçлеме пуçларĕç. Анат Ачакри комсомол организацийĕ иртнĕ çулсенче лайăх ĕçлесе пыратчĕ. Капров йулташ комитет çекретарĕ пулса ĕçлеме пуçланăранпа ĕç пĕтĕмпех йапăхса кайрĕ. Капров хăй спекулянтла ĕçсем тума тытăннă.

Польанкăри Кирăв йачĕпе тăракан колхозри пуçламĕш организаци политикăлă воспитани ĕçне йĕркелемен. Çавăнпа та хăшпĕр çамрăксем, вĕсемпе пĕрлех комсомолецсем те, йăла тĕлĕшĕнчен пăсăлса кайнă.

Районра чылай пуçламĕш организацисен ĕçĕсем йапăхланни, дисциплинă пулманни, çамрăксем хушшинче политикăлă воспитани ĕçĕ çителĕксĕр пулни пĕтĕмпех комсомол райкомĕн работникĕсем пуçламĕш организацисенче, колхоз çамрăкĕсем хушшинче пулманнинчен, вĕсен пурнăçĕпе интересленменнинчен килет. Пуçламĕш организацисемпе çыхăнманранах ĕнтĕ октябĕр уйавĕнче пулса иртнĕ актив пухуне 350 çын вырăнне 50 çын çеç пухăнчĕ.

Ник. Цветков.

Тĕпком постановленине ырларĕç

ТАВАЙ (телефон тăрăх). Нойабĕрĕн 17-мĕшĕнче районри партактивăн пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн „ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсне“ кăларнă май парти пропагандине йĕркелесси çинчен“ постановленине сÿтсе йаврĕ. ПСК(б)П райкомĕ кадрсен кĕçĕн сыпăкĕ вальли тунă кружокра 8 çын, вăтам сыпăкра 18, ытларах хатĕрленнисен кружокĕнче 17 çын вĕрентме палăртнă. ПСК(б)П Историн Кĕске курсне вĕренекенсем пурте учебник илнĕ.

Пухура тухса каланисем пурте ПСК(б) Тĕп Комитечĕн постановленине ырларĕç.

Каховский.

Хасан кÿлли патĕнчи çапăçусенче пулнă бойецсемпе командирсем Хабаровскри госпитальсенче сывалса çитнĕ хыççăн хăйсен частĕсене таврăнаççĕ.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: РСФСР Верховнăй Совет депутачĕ Е. З. Охрименко хăйсен частĕсене таврăннă кĕçĕн командирсемпе калаçат. Сулахайран сылтăмала: И. И. Кузнецов, П. Л. Йакăвлĕв тата О. Е. Усолнцĕв. (1938 çулти çентябĕрте ÿкернĕ).

Соколов фото-ÿкерчĕкĕ (Сойузфото).

Трахома пĕтерессi—медработниксен хисеплĕ ĕçĕ

Патша саманинчен йулнă трахом чирне пĕтерес ĕçе халăх тăшманĕсем пур майсемпе те чăрмантарса пынă. Вĕсем, пĕр йенчен, Чăваш республикĕнче трахома пĕтернĕ, тесе рапăртсем çырса парторганизаципе ĕççыннисене лăплантарма пăхнă. Тепĕр йенчен, трахом чирне 6 уйăх хушшинчех сыватма пулат, тесе пакăлтатнă. Кун çинчен халăх тăшманĕсем брошÿрă та çырса кăларнă.

Хальхи вăхăтра медицинă работникĕсем тăшмансен сăтăрлă ĕçĕсене ăнланса илнĕ. Трахома пĕтермели майсем пирĕн çителĕклĕ. Уйрăм врачсем каланă тăрăх, трахом чирне лайăх, тимлĕн емеллесен 3—4 уйăх хушшинчех сыватма пулат. Анчах пайанхи куна тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкийĕсене пĕтерсе, трахомран массăлăн сыватма тăрăшни çук-ха. Трахомран сыватас ĕçе шкулсенче, ача площадкисенче, допризывниксем хушшинче те начар йĕркеленĕ. Чылай районсенче трахома пĕтересси çинчен калаçсах вăхăта ирттереççĕ. Трахомлисене сыватас вырăнне, пĕрмай тĕрĕслеççĕ. Кăна Хĕрлĕ Чутай районĕнчи ĕçсем пит те лайăх кăтартса параççĕ.

Районри сывлăха сыхлав пайĕ кашни уйăхрах трахом работникĕсене район центрне пухса канашлусем ирттерет. Ку канашлусенче трахома пĕтересси çинчен темиçе хут сÿтсе-йавса, лайăх решенисем йышăннă. Кунта 1936 çултах 1937 çулти йанварĕн 1-мĕшĕ тĕлне трахома пĕтермеле, тесе решени йышăннă. Анчах трахом пĕтмен, решени решенипех йулнă. Кун хыççăн 1938 çулти майăн 1-мĕшĕ тĕлне пĕтеретпĕрех, тесе тепĕр решени йышăннă. Йулашкинчен çентябĕр уйăхĕнче Октябĕр революцийĕ 21 çул тултарнă тĕле шкул ачисем хушшинче трахома пĕтермелех, тесе виççĕмĕш решени йышăннă. Халĕ нумай пулмаст, нойабĕр уйăхĕнче трахом работникĕсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Ку пуху та 1939 çулти мартăн 1-мĕшĕ тĕлне трахома пĕтермеле, тесе йышăнса хăварнă. Темĕн чул решени, хут чăтат. Анчах ĕç малала кайни курăнмаст-ха.

Çийелтен тĕрĕсленĕ тăрăх районра трахомлисем 2 пин çын ытла шутланаççĕ. Районра 23 трахомпункт, 72 медработник. Ку медработниксем мĕнле ĕçленине тĕрĕслемеççĕ, вĕсене ĕçре пулăшмаççĕ. Чылай трахомпунктсенче пит çумалисем, алшăллисем, халатсем, супăнь те çук. Хăшпĕр пунктсем емелсĕр, пинцетсемсĕр лараççĕ.

— Трапай йалсоветĕнче трахпунктра епĕ виçĕ уйăх ĕнтĕ ĕçлетĕп. Шкулти 16 ачана трахомран сыватрăм. Анчах йалсовет пире ĕçре пулăшма мар, трахпункт çуртне хутма вутă памасăр тăрат. Епĕ супăнь те хам укçапа илетĕп. Спирт çук. Врачсем пырса та пăхмаççĕ,—тет Романăвă трахсестра.

Трахработниксем виç-тăват уйăх хушши ĕçукçи илеймеççĕ. Задонскайа трахсестра 4 уйăх хушши ĕнтĕ ĕçукçи илмен. Вăл ĕçлекен пунктра нимĕнле емел те çук. Ахальтен мар ĕнтĕ хăшпĕр çĕрте трахпунктсем пачах хупăннă, йе ĕçлемесĕр лараççĕ.

Районра лайăх ĕçлекен трахпунктсем пур. Терейкинă йулташ ĕçлекен пункта кашни кун 30—40 çын куçĕсене емеллеме çÿреççĕ. Ижикăвă трахсестра шкулти ачасене трахомран сыватас тĕлĕшпе активлă ĕçлет. Вăл пĕр уйăх хушшинче 10 ачана йахăн сыватнă. Районри сывлăха сыхлав пайĕ вĕсен лайăх ĕç опычĕсене сарас тĕлĕшпе нимĕн те тумаст. Кунта лайăх ĕçлекен трахомработниксенчен пĕр çынна та премилемен.

Трахома пĕтерес ĕçе врачсен йертсе пымала. Вĕсен уйăхра пĕр хутран кайа мар трахпунктсенче пулса трахработниксене ĕçре пулăшмала. Анчах врачсем трахома пĕтерес ĕçе кирлĕ пек хакламаççĕ-ха. Охлеванкин врач виçĕ уйăх хушшинче те икĕ трахпунктра анчах пулнă.

Бажайкин врач та „вăхăт çук“ тесе трахпунктсене кирлĕ пек пулăшса пымаст. Сывлăха сыхлав пайĕн пуçлăхĕ Макарăв йулташ та çавăн пекех: „Трахомпа кĕрешес ĕç начар пыни врачсем çитменнинче“, тесе хăйне хăй лăплантарат. Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕ трахома пĕтерес пирки ийуль уйăхĕнче икĕ приказ кăларнă та лăпланнă. Вырăнсенчи трахработниксем ку приказа пурнăçлама мар, ун çинчен пĕлмеççĕ те.

Вĕçĕмсĕр калаçнипе, решенисем, приказсем çырнипе трахома пĕтерме май çук. Ку ĕçе пĕтĕм массăна мобилизацилени кирлĕ. Трахома пĕтерес ĕçе парторганизацисене хутшăнма вăхăт ĕнтĕ.

П. Перлов.

ПСК(б)П Историне чăвашла куçарас ĕçпе ăна мĕнле куçарни çинчен

ПСК(б)П Тĕпкомĕ ырланă Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (большевиксен) Парти историйĕн Кĕске курсĕ большевикла кадрсене „политика тĕлĕшĕнчен пиçĕхтермеле“ тесе, большевикла кадрсене „пиççе çитнĕ ленинцăсем, марксиссем тумала“ тесе Сталин йулташ кăтартса панине пурнăçа кĕртес ĕçре калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрат. Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (большевиксен) Партин Историне пичетлесе кăларнипе большевиксен партийĕ, совет халăхĕ, пĕтĕм тĕнчери пролетариат хăйсен аллине теори тĕлĕшпе калама çук вăйлă идейăлă хĕçпăшал илчĕç. Ку идейăлă хĕçпăшал тĕнчене революцилĕ улшăнтарса пырас ĕçе вăйлăн малала йарĕ.

Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (большевиксен) Парти Историйĕн Кĕске курсĕн паха та чаплă йенĕсене сăмахпа каласа пĕтерейес çук: историне пĕтĕм чĕререн, çине тăрса, вăйхала хĕрхенмесĕр вĕренсен унăн пур чаплă та паха йенĕсене туйса илме пулĕ. Çапла вĕренсен тин, ПСК(б)П Историйĕн паха та чаплă пур йенĕсене те кирлĕ пек таранăн ăнланса илме пулĕ. Тата та тĕрĕсрех каласан—**малашнехи кунсем кăна, çулсем кăна, пĕр истори кăна çавна тĕрĕс те çителĕклĕ таран анлăн кăтартса парĕç,** мĕншĕн тесен ПСК(б)П Историйĕ—тĕнчене революцилĕ улăштарас ĕçре вăйларан та вăйлă хĕçпăшал.

Пĕр сăмахпа каласан, калама та çук пысăк та паха Кĕске курсăн историлĕ вырăнĕ.

Çавăнпа та ĕнтĕ пирĕн Совет Сойузĕнчи халăхсем анчах мар, урăх государствăри халăхсем те (сăмахран, Китайра) ПСК(б)П Историне хăйсен чĕлхи çине куçарса пичетлеççĕ.

Тăван чĕлхе çине тĕрĕс те вулама çăмăл чĕлхепе куçарасси пит те паха ĕç. Ку ĕç çăмăл ĕç мар, пĕр çын, ик çын ĕçĕ мар. Ку ĕçе мĕн май пур таран ытларах йулташсене йавăçтарас пулат.

ПСК(б)П Историне чăвашла куçарса „Чăваш Коммунĕ“ хаçатра пичетленине пĕтĕм чĕререн хапăллас пулат, мĕншĕн тесен, пур ытти ырă йенĕсемсĕр пуçне, куçарнине хаçат тăрăх вуласа кĕнеке туса пичетлесе кăлариччен йусама та, йакатма та пулат.

Йусамалисем ĕнтĕ, йакатмалисем пур, пулмасăр та пултараймаççĕ, мĕншĕн тесен, — паçăрхи шухăшах калар-ха,—ПСК(б)П Историне куçарасси вăл пĕр çын, ик çын ĕçĕ мар, тата унтан та ытларах, пĕр ернере туса пăрахмали ĕç мар.

* * *

Епĕр ытларах тилмĕрсе тăваттăмĕш сыпăкри иккĕмĕш уйрăмăн пĕр пайĕ çине çавrăнса пăхрăмăр („Чăваш Коммунĕ“, 22-X-1938 ç. № 244). Чăн та, ку уйрăм хăй те куçарас тĕлĕшпе пит те йăвăр уйрăм. Анчах çапах та хăшпĕр вырăнсене тĕрĕсрех йе ăнланма çăмăлтарах куçарма май пулнă.

1. Вырăслара „...любое явление в любой области природы может быть превращено в бессмыслицу, если его рассматривать вне связи с окружающими условиями...“ тенĕ шухăша чăвашла çапла куçарса редакциленĕ: „...природăн кирек хăш облăçĕнчи кирек хăш йавленине те, ăна таврари условисемпе çыхăнтармасăр, вĕсенчен уйăрса илсе пăхсан ниме пĕлтермен шухăш туса йама пулат...“ тенĕ. Тĕрĕс мар. **Йавленийе шухăш туса йама çук.** Кунта „ниме пĕлтермĕш...“ тесе кăна куçармала пулнă.

2. Вырăслара: „Для диалектического метода важно прежде всего не то, что...“ тенĕ шухăша чăвашла çапла куçарса редакциленĕ: „Диалектикăлă методшăн, пуринчен малтан, ...мар кирли пулса тăрат“. **Важно** сăмаха **кирли** тесе куçарни ку вырăнта вырнаçулă мар. **Паха** тесе куçарсан тĕрĕсрех пек.

3. Вырăслара: „...диалектический метод считает, что процесс развития следует понимать не как движение по кругу... а как поступательное...“ тенĕ шухăша чăвашла çапла куçарса редакциленĕ: „диалектикăлă метод çакăн пек шутлат: аталану процесне çаврашка тăрăх пулса пыракан йухăм пек мар... ăнланмала, малала пусса пыракан йухăм пек... ăнланмала...“ тенĕ. „По кругу“ тенине, пирĕн шутпа „пĕр çаврашка йĕр тăрăх“ тесе куçарсан лайăхрах.

4. Вырăслара: „...тем самым доказало, что в конце концов все совершается диалектически... она движется не в вечно однородном, постоянно сызнова повторяющемся круге...“ тенине чăвашла çапла куçарнă: „... çавăнпа пĕрлех çакна кăтартса панă: природăра, йулашкинчен, пурте диалектикăла... пулса пырат... природă ĕмĕрех пĕр пек çаврашкара мар, пĕр майах тепĕр çĕнĕрен пулса тăракан çаврашкара мар малала кÿçса пырат“ тенĕ. Пирĕн шутпа çапла куçармала пек: „Çапла материал панипе природăра йулашкинчен пур-пĕрех пурте диалектикăла... пулса пынине ĕнентерÿлĕ кăтартса парат... природă ĕмĕрех пĕртте улшăнман, йаланах тепĕр хут таврăнса пыракан пĕр çаврашка йĕр тăрăх мар, малала куçса пырат...“

5. Вырăслара: „Характеризуя диалектическое развитие, как переход от количественных изменений к качественным изменениям, Энгельс говорит“ тенине чăвашла çапла куçарса редакциленĕ: „Енгельс, диалектикăлă аталану çинчен ăна количествăлă улшăнусем качествăлă улшăнусем патне куçни вырăнне хурса палăртнă хыççăн, çакăн пек калат:“ тенĕ. Пит те йăвăр. Çăмăлтарах пулмĕ-ши çапла куçарсан: „Енгельс, диалектикăлă аталану вăл количествăлă улшăнусенчен качествăлă улшăнусем патне куçни пулнине палăртса парса, çапла калат:“.

6. Вырăслара: „Это ведь гегелевская узловая линия отношений меры...“ тенине, йе малтарахра „...узловые точки...“ тенине пачах тĕрĕс мар куçарса редакциленĕ. „Узловые точки“ тенине „тĕп точкăсем“ тесе куçарнă.

Мĕн тени пулат-ха „узловые точки“, „узловая линия отношений меры“ тени?

Пур йапала та тĕнчере таттисыпписĕр, калăпăр, цифрăсем, шут йĕмчен илсен нульрен пуçласа ик йеппеле вĕçĕмсĕр пысăкланса пыраççĕ, анчах пирĕн куçа чи малтан çав вĕçĕмсĕрлĕхĕн уйрăм пайĕ, уйрăм „татăкĕ“ (пирĕн примерта уйрăм цифрă) курăнат, пирĕн ăс-пуçа уйрăм пайăн пырса кĕрет. Татти-сыпписĕрлĕх татăлнă пек курăнат. Кашни йапала кашнинче хăйне расна пахалăхпа (качествăпа) курăнат. Çав „татăкăн“, „сыпăкăн“ курăнакан йапаласем пĕр качествăлă сыпăкран тепĕр качествăлă сыпăка куçнине философире „узловые точки“ йе проста „узлы“, йе „переход“, йе „перерыв“ теççĕ. Çапла ĕнтĕ „узловые точки“ тенине „тĕп точкăсем“ тесе куçарма йурат-и? Çук, йурамаст. Тĕрĕс мар. Малала. Природăра пур метериаллă йапаласем те количествăпа качествă пĕрлĕхĕ пулса тăраççĕ. Тĕслĕхрен, шывах илер-ха. Температурă ытла çÿлех мар, йе ытла та айалтах мар пулсан шыв шывăнах (тумламлă шĕвĕнех) йулат. Температурăна çÿлеле ÿстерсе йарсан шыв пар (пăс) пулса кайат, йе температурăна антарса йарсан шывран пăр пулат. Çапла ĕнтĕ природăра пур материаллă йапаласем те пĕр паллă вăхăтра пĕр-пĕр количествăпа качествă пĕрлĕхĕ пулса тăраççĕ. Çав количествăпа качествă пĕрлĕхне философире мерă теççĕ.

Кашни йапалан аталанăвĕ çапла пулса пырат: малтан, тĕпрен илсен, йапаланăн количествă йенĕпе улшăну пулса пырат. Пĕр-пĕр самантчен количествă йенпе улшăнасси йапалан качествине улăштармасăрах пулса пырат: йапала мĕнле качествăлă пулнă пĕр-пĕр самантчен çав качествăллипех йулат. Çапла вара количествă йенпе улшăнасси пĕр-пĕр самантчен ĕлĕкхи (кивĕ) мерă картинчех, кивĕ мерă ăшĕнчех пулса пырат. Анчах йапала количествă йенпе мĕн ытларах та ытларах улшăнса пырса ĕлĕкхи мерăран „тулса“ иртсе кайат те ăна сиктерсе ватса пăрахат, ĕлĕкхи качествă вырăнне çĕнĕ качествă çуралса тухат. Çĕнĕ количествăпа çĕнĕ качествăн пĕрлĕхĕ (урăхла каласан, çĕнĕ мерă) çуралса тухат. Аталану татти-сыпписĕр малала, çĕнĕ çаврашка йĕр тăрăх, пырат. Çĕнĕ йапала количествă йенпе каллех улшăнса пырат пырат те кайран-кайран каллех çĕнĕ мерă çĕнĕрен сиксе ванса ишĕлсе кайат, тата та çĕнĕ качествă çуралса тухат, тата та çĕнĕ количествăпа çĕнĕ качествă пĕрлĕхĕ (урăхла—мерă) çуралса тухат. Çапла малала пĕр вĕçĕмсĕрех. Йапала аталанăвĕ сикчевлĕ куçусем пулса пынă пирки йунашар тăракан темĕн чухлĕ çĕнĕ те çĕнĕ мерăсен çыххи пек курăнат. Акă ĕнтĕ мĕншĕн кирек мĕнле аталанăва та мерăсен сикчевлĕ куçу çулĕ пек („узловая линия отношений меры“) кăтартса пама пулат.

Апла пулсан „узловая линия отношений меры“ тенине „мерă хутшăнăвĕсен... тĕп йĕрĕ“ тесе куçарма йурат-и? Паллах, йурамаст. Ун пек куçарни тĕрлĕ сăмахсене йунашар лартса тухнине çеç кăтартат.

* * *

Паллах, „пиртен ытла йусама çук!“ тесе калаçран епĕр тем тери айакра тăратпăр. Епĕр сĕнни шухăшлаттарса тата та лайăхлатмалисем, тен, парĕ. Ку аван та. Пĕр çав йусаса йакатас шухăшпа анчах çыратпăр та. Çав ĕмĕтпех ытти йулташсене те мĕн вăй çитнĕ таран пулăшма чĕнетпĕр.

Д. ИВЛЕВ.

Германи австри оккупанчĕсене Украинăран хăваласа йанăранпа çирĕм çул тултарнă тĕле (1918 çулти нойабĕр—1938 çул).

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: „В скоропадни" йатлă карикатура. Ăна 1918 çулта „Коммунист" хаçатра (Украинăри Коммуниссен (большевиксен) Партин Тĕпкомĕн оргбӳро органĕ) пичетлесе кăларнă.

(Украинăри К(б)П Тĕпкомĕн Парти историй институчĕн материалĕсем тăрах).

Сойузфото репродукцийĕ.

А Т Т Е

ИВАН МАЛГАЙ

Ес пирĕн учитĕл, ес пирĕн атте,
Çĕршывăн тулли, иксĕлми хăватне
Чĕререн ырласа хам йурлана чухне,
Сана тав тăватăп, Сталин аттем.
Ес—халăх хавасĕ, ес—çутă хĕвел,
Ес—пурнăç илемĕ, ес—пирĕн телей.
Çут шуçăм килет-и ирпе малйенчен,
Тухаť-и хĕвелĕ хитрен çĕкленсе,
Пире çавă сăн калама çук паха,
Унран та паха, Сталин ес халăха.
Сан йатпа бойецсем çĕршыва хуралласçĕ,
Сан йатпа пилотсем тӳпере йарăнаççĕ.
Сан йатпа çамрăксем хăť хĕлле, хăť çулла
Ту çинче, сывлăшра, тинĕсре те пулаç.
Санпала ĕççыннийĕн хăвачĕ ӳсет,
Сана кашни çын чĕререн хисеплет.
Патранчăк шыв йевĕр пăтраннă кив пурнăç,
Хĕнхурĕ те пусмăр пĕр вĕçĕмсĕр урнă.
Выçлах та сивĕ алхаснă йалан,
Чир пынă унчух хулана та йала.
Хаљ иртнĕ çав пурнăç, кураймĕ тек пусмăр,
Телейлĕ çĕршывăн хуçи пайан хамăр.
Çуралтăм та ӳсрĕм, курмарăм нуша,
Пуйан хуçасемшĕн усмарăм пуçа.

Мана çут Октабĕр ӳстерчĕ савса,
Мана аслă Сталин ӳстерчĕ пăхса.
Маншăн йурлаççĕ чипер кайăксем.
Маншăн çуралаççĕ чипер чечексем,
Маншăн çак пурнăç, маншăн çул уçă,
Маншăн килет çĕкленсе ирхи шуçăм.
Епĕ телейлĕ, пурнап савăнса,
Хаваслăх йурри ман йухаť шаранса.
Хăш ĕмĕр, хăçан сарлака ирĕкпе
Пире савăнтарнă çапла, хаљхи пек!
Кунта хаљ, кунта кашни çыншăн телей,
Кунта кашни çыншăн çунаť çут хĕвел,
Ачашшăн лăпкаť ăшă çилĕ пире,
Савса хумхатаť вăл колхозлă хире.
Пуриншĕн те чаплăн курнаť çут хĕвел,
Пуриншĕн те Сталин—чи хаклă телей.
Вăл пирĕн учитĕл, вăл пирĕн атте,
Йалав пек çĕклетпĕр хаљ унăн йатне.
Йурлаççĕ ăна ырласа халăхсем,
Мухтаççĕ ăна ман çĕршыв çыннисем.
Сталин, епир йаланах санпала
Пыратпăр хăйулăн утса малала!

1938 ç.

Пĕтĕм тĕнчери шахмăт турнирĕ

Ботвинникăн чаплă çĕнтерĕвĕ

Нойабĕрĕн 17-мĕшĕнче Утрехтра, пĕтĕм тĕнчери шахмăт турнирĕн саккăрмĕш турĕ пулнă. Ботвинник—Файн парти никам выљăса илмесĕр пĕтнĕ. Капабланка Флортан выљăса илнĕ. Кереспе Ейве вăййи никам выљăса илменнипе пĕтнĕ. Решевскипе Аљохин партине тепĕр вăхăта хăварнă, вăй Решевски йенче.

Нойабĕрĕн 18-мĕшĕнче Ботвинникпа Аљохин çиччĕмĕш турта пĕтермесĕр хăварнă партине выљана. Совет гроссмейстерĕ Ботвинник чаплă çĕнтерӳ тунă—10-ш ход хыççăн Аљохин паранна.

Саккăрмĕш тур хыççăн малта Файн пыраť, унăн 6 очко. Керес иккĕмĕш вырăн йышăнаť, унăн 5,5 очко. Виççĕмĕшпе тăваттăмĕш вырăнсенче Ботвинникпа Капабланкă, вĕсен 4,5-шар очко. Пилĕккĕмĕшпе улттăмĕш вырăнта Решевскипе Аљохин, вĕсен 3-шер очко. Кунсăр пуçне тата вĕсен выљаса пĕтермесĕр хăварнă парти пур, вăй Решевски йенче. Çиччĕмĕш вырăнта Ейве, унăн 2,5 очко, саккăрмĕш вырăнта Флор, унăн 2 очко.

— О —

Хроника

** ССР Сойузĕн Верховнăй Совет Президиумĕ И. А. Бенедиктăв йулташа ССРС Çĕрĕç Халăх Комиссарне лартнă.

** ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ В. В. Йарцĕв йулташа ССРС Çыхăну Халăх Комиссарĕн пĕрремĕш заместителĕ пулма çирĕплетнĕ. (ТАСС).

— О —

Тӳрлетни

„Чăваш Коммунĕ" хаçатăн нойабĕрĕн 15-мĕшĕнче тухнă номĕрĕнчи „И. С. Тургенĕв" йатлă статйари пĕрремĕш абзац вĕçне: „Вăл Хĕвеланăç Йевропă литературинче те пысăк йĕр хăварнă" тесе вуламала. Йулашки абзац пуçламăшне „Францири реалисĕсене (Флобĕр, Зоља, Доде, Гонкурсем тата Мопассан) Тургенĕв нумай пулăшнă" тесе вуламала.

— О —

Пулни-иртнисем

Çак кунсенче Шупашкарти çăкăрсем пĕçерекен савăтра ĕçлекен Ал. Дмитрийĕв хулари милици управленине пырса, Кировскипоçолăкран тавăраннă чухне ун çине касхине такамсем виççĕн тапăнса паљтоне хывса 118 тенкĕ укçа илсе тарни çинчен пĕлтернĕ. Милици работникĕсем çак ĕçе тĕплĕн тĕрĕсленĕ хыççăн, Дмитрийĕва çаратни çинчен пĕлтерни пĕтĕмпех суйа пулнине палăртнă. Çакăн пек суйа пĕлтернипе вăл хăйшĕн усăллă ĕç тăвасшăн пулнă. Çапла хăтланнăшăн Дмитрийĕва уголовнăй кодексăн 95-мĕш статйи тăрăх ответ тыттарма ĕçе прокуратурăна панă.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНĂВ.

Совет Сойузĕ тăрăх

** Нойабĕрĕн 18-мĕшĕнче Ташкентра иккĕмĕш пилĕкçуллăх займĕн тăхăрĕмĕш тиражĕ пĕтнĕ. Вăл тиражра 1 мĕлйун та çĕр вăтăр пин выигрыш пулнă.

** Нойабĕрĕн 18-мĕшĕнче Наљчикре Осоавиахимăн Пĕтĕм Сойузри вунаккĕмĕш лоторей выљавĕсен тиражĕ хупăннă. Выљав таблицине çак кунсенчех хаçатсенчĕ пичетлесе кăлараççĕ.

** Кăçал Мускавра колхозлă цасарсене йеркелесе лайăхлатас ĕçе пилĕк мĕлйун çурă тенкĕ укçа хываççĕ.

** Онегăри механикă тата металлурги савăчĕ газогенератăрсем туса кăларма тытăнна. Кăçал савăт „ЧГЗ—60" трактăр валљăн 178 газогенератăр туса кăларнă. Халĕ вĕсем Инçет-Хĕвелтухăçĕнче тата Карелинче ĕçлеççĕ. Савăтăн кăçал тата 332 газогенератăр туса кăлармала, килес çул—1000 газогенератăр.

** Аджаринчи совхоземпе колхозсенче мандаринсене пухса кĕрес ĕç анлăн саралса пыраť. Хатĕрлĕв пункчĕсем 19.217 штук мандарин йышăннă та ĕнтĕ. Нойабĕрĕн 17-мĕшĕнче „Абхазия" теплоход çине Мускав, Ленинград тата Сойузри ытти хуласене валљи 37 вакун мандарин тийенĕ.

(ТАСС).

Çамрăк учонăй Йудин йулташăн çитĕнĕвĕсем

Комсомолĕц Алексей Йудин тенĕçе çул хушши ĕнтĕ хыљăксăр урпа акса ӳстерес тĕлĕшпе пикенсе ĕçлет.

Вăл 1935 çулта пĕрремĕш хут опытлă уйра çĕр пĕрчĕ урпа акнă, çав çĕр пĕрчĕрен 2 700 грам урпа тухнă.

Кăçал çамрăк учонăй хăйĕн „Ю" текен урпа вăрлăхне Сойузри тĕрлĕ облăçсенчи 150 колхоза йарса панă.

Колхозник-опытник Хандожко йулташ (Орлов облăçĕ) çав урпана 28 килограм акса 1.409 килограм пухса илнĕ. Çав районрах вырăнти урпана 180 килограм акса 400 килограм кăна пухса кĕртнĕ. Щорс йачĕпе тăракан колхозри (Чернигăв облăçĕ) хатă-лабораторипуçлăхĕ Галата йулташ „Ю" урпана 22 килограм акса 2.217 килограм пухса илнĕ.

Çĕнĕ суртлă урпа пысăк тухăçлă, кирек мĕнле çанталăка та тӳсекен тата Сойузăн нумай районĕсенче акма йурăхлă тыра пулса тăраť. Вăл урпа çулталăк хушшинче икĕ хутчен пиçсе çитет. Унăн кашни пучахĕнче 110 пĕрчĕ, халиччен акакан урпан кашни пучахĕнче 40 пĕрче йахăн çеç.

(ТАСС).

Оборонă ĕçне вĕренеççĕ

Аксури (Тутар АССР) чăвашсен педагогика училищийĕ çумĕнчи Осоавиахим организацийĕ оборона значокĕсен нормисене парас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса иртерчĕ. Осоавиахим членĕсем 18 çын ПВХО значокĕн иккĕмĕш сыпăк нормине парса инструктăр йатне илчĕç. Вĕсем пурте ПВХО кружокĕсене йертсе пыраççĕ. Абрамкинпа Никољкинă инструктăрсем Октабĕр революцийĕ 21 çул тултарнă тĕле ПВХО значок илнисене 25-шер çын хатĕрленĕ.

Осоавиахим пуçламĕш организаци председателĕ Мундрейкинпа училищăри çар ĕçне вĕрентекен преподавателĕ Ç. Н. Абрукăв йулташсем çар ĕçне вĕренессине лайăх йертсе пыраççĕ. Йулашки вăхăтра „Ворошилăвла стрелок" значокне илнисем 20 çын хутшăнчĕç. Осоавиахим членĕсем противогаз тăхăнса поход туса иртерчĕç. Виçĕ хутчен 6-шар километра кайса килнĕ.

Йулашки кунсенче çĕнĕрен 79 çын члена кĕчĕç. П. Самарйокин.

Перепиçе тĕплĕн хатĕрленеççĕ

ШĂХАСАН Маťшу йалсовечĕ 1939 çулти йанварĕн 17-мĕшĕнче пулса иртекен халăх перепиçне иртерме тĕплĕн хатĕрленет. Йалсовечĕ халăх шутне иккĕмĕш хут тĕрĕслесе тухрĕ. Перепиç вăхатĕнче ĕçлеме шанчăклă, тĕрĕсленнĕ çынсенчен пулăшу комиççи тата икĕ счотчик, пĕр контролљор уйăрса хунă.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ П. А. Григорйĕвă йулташ колхозниксемпе йединоличниксен пухăвĕсенче перепиç çинчен ăнлантарса параť тата вăл килхуçи хĕрарăмĕсем патне кайса перепиç иртересси пирки калаçусем туса иртерет.

Перепиçе хатĕрленес ĕçре комсомолĕцсем активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. Алексей Филиппăв комсомолĕц 1-мĕш бригадăри колхозниксемпе колхозницăсене хаçатсем çинче пичетленĕ статйасем тăрах перепиç çинчен ăнлантарса параť.

Колхозниксемпе колхозницăсем перепиç çинчен иртерекен калаçусене интересленсе итлеççĕ, ăнланман ыйтусене агитатăрсенчен ыйтса пĕлеççĕ.

Ник. Йакăвлĕв.

— О —

Колхоз активĕ перепиçе хатĕрленет

КУСЛАВККА. Тĕрлемĕс йалĕнче „Коммунар" колхоз çак йулашки кунсенче Пĕтĕм Сойузри халăх перепиçне хатĕрленес тĕлĕшпе вирлĕн ĕçе тытăнчĕ. Йалсовет членĕсем тата комсомолĕцсем колхозниксемпе колхозницăсене çамрăксен пухăвĕсенче халăх перепиçне мĕнле иртермели çинчен докладсем туса ăнлантараççĕ. „Коммунар" колхоз çумĕнче тухса тăракан „Осоавиахимовец" йатлă стена хаçат çинче перепиç çинчен çутатаççĕ. Вулав çуртĕнче перепиç кĕтесси организациленĕ.

И. Харитонăв.

Йĕлтĕрçĕсен тренировки

Архангĕљск хулинче „Спартак" спорт обществин чи лайăх йĕлтĕрçисем тренировкă тума пуçланă. Совет Сойузĕн тĕрлĕ хулисенчен пуçтараннă хĕллехи спорт ăстаçисем кунта пĕр уйăх хушши пулаççĕ.

Пирĕн Чăваш республикĕнчен унта Бурашникăв тата Гушчинă йулташсем кайнă.

Атăл çинче

Атăл тăрăх, айалала та тăвалла та, пăрахутсем çӳреме чарăннă. Шупашкарти икĕ пристăнне те затона илсе кайнă. Атăл леш йенне каçаракан паромсем ĕçлеме чарăннă. Атăл тăрăх талкăшпех пăр йухаť.

Кăçалхи çул навигаци тапхăрĕ 209 кун хушши пынă.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Чăвашсен йалхуçалăх институтĕнче IV-мĕш курсра вĕренекен студент Долгов й. III-мĕш курсра вĕренекен студента Кротăв йулташа выљăх-чĕрлĕх çинчен консултаци параť.

Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

И. С. Тургенĕва асăнса вечĕр иртернĕ

Вырăс литературин классикĕ И. С. Тургенĕв çурални 120 çул тулнă йатпа, нойабĕрĕн 11-мĕшĕнче Шупашкарти коммуналлă строителствă техникумĕнче писателе асăнса вечĕр пулнă.

Вечĕрта вырăс чĕлхипе литература преподавателĕ Старостин йулташ И. С. Тургенĕвăн литературăри ĕçĕсем çинчен пысăк доклад тунă. Вĕренекенсем докладчике Тургенĕв писателĕн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен нумай ыйтусем панă.

Вечĕрта пулнисене „Семеро смелых" йатлă кинокартинă кăтартнă.

Ачасен художĕствăлă пултарулăхĕ

Ишекри (Ишлей районĕ) вăтам шкулта ачасен художĕствăлă пултарулăх кружокĕсем—хор кружокĕ иккĕ, драмкружок, струнный оркестр пур.

Пĕрремĕш хорта 2-мĕшпе 3-мĕш классенче вĕренекен ачасем тăраççĕ. Иккĕмĕш хор аслăрах классенче вĕренекенсенчен тăраť. Ку хорта 130 ача. Хора учитĕл Иљухин йулташ йертсе пыраť. Ку хор ĕнтĕ нумай çĕнĕ йурăсене пит те аван йурлаť. Хорта тăракан ачасем нотă грамăтине пурте пĕлеççĕ. Драмкружок членĕсем спектакљсем лартаççĕ, сăвăсене, калавсене илемлĕ калама тата вулама вĕренеççĕ.

Çавăн пекех тата Ишлейри ачасен хорĕ те аван ĕçлет. Вăл хора учитĕл Михаил Степанăв йулташ йертсе пыраť. Ишлейри вăтам шкулти спорт кружокĕ физкуљтурă тата балет номĕрĕсене пит те аван вĕренсе пыраť. Вăл кружока 8-мĕш класра вĕренекен Добросмыслăв йертсе пыраť.

Н. Амурцĕв.

— О —

Каçхи вăтам шкул

Шупашкарта рабочисемпе килхуçи хĕрарăмĕсем валљи каçхи вăтам шкул ĕçлет. Вăл шкулта 5—10 классенче пурĕ 287 çын вĕренет

Франц Шуберт

Иртнĕ ĕмĕрти чи аслă композитăрсенчен пĕри—Франц Шуберт вилни нойабĕрĕн 19-мĕшĕнче 110 çул тултарчĕ.

XIX-мĕш ĕмĕрти аслă музыкантсен хушшинче Франц Шуберт чи тарăн шухăшлă лирик пулнă. Унăн лирики нумай йышлă массă савăнăçĕпе тата хуйхипе çыхăнса тăнă, унăн лирики çав савăнăçа йе хуйăха уçăмлăн кăтартса панă. Çавăнпа та ĕнтĕ унăн уçăмлă та чĕререн йанăраса тухакан кĕввисем, вĕсене вăл çĕр çул ĕлĕкрех çырнă пулин те, халиччен пирĕн аудиторине хумхантараççĕ, пĕтĕм чунхавалне çĕклентереççĕ, килентереççĕ. Сăмахран, аслă композитăрăн „В путь" („Мельник") йе „Форель" йатлă йуррисене, музыкă инструменчĕсемпе выљамали „Музыкальный момент" йе „Военный марш" йатлă пйесисене пирĕн совет ĕççыннийĕсем лайăх пĕлеççĕ, чунтан чĕререн йуратса итлеççĕ. Шуберт музыкин çутă та çамрăк оптимисăмĕ, халăх кăмăлĕпе-хавалĕпе çыхăнса тăракан йанăравĕ итлекенсен чĕрине хăй патне туртăнтараť, хавхалантараť.

Шуберт тĕксĕм реакци тапхăрĕнче пурăнса иртерне. Францири буржуалă революцин аслă тăвăлĕсем кисренсе йулашки хут сас панă. Феодаллă-монархилĕ власа кайала тавăрас тĕлĕшпе Венă хули чи пысăк вырăнсенчен пĕрне йышăннă. Полици тата католиксен пусмăрĕн вилĕмлĕ хăрушă атмосфери кирек мĕнле чĕрĕ шухăшсене те пăвнă, путарнă.

Аслă композитăрăн кĕске пурнăçĕ (1797—1828) выçăлан-тутăлан иртнĕ, хĕн-хурлă пулнă. Прихут шкулĕнчи учителĕн ывăлĕ пулнăскер вăл, Венă хули çывăхĕнче çуралса ӳснĕскер, çитмен пурнăçăн йӳçĕлĕхне çамрăклах тутанна, хуйхă мĕн иккенне çамрăклах туйнă. Ăна музыкăна вĕрентекен чи малтанхи учителĕсем хăйĕн ашшĕ тата чиркӳри пĕр регент пулнă. Пĕтĕмĕшле пĕлӳлĕхе вăл прихут шкулĕн темиçе класне пĕтернипе çеç туйанна. 16 çула çитсессĕн Шуберт, талантлă композитăр пулассине пĕр иккĕленмесĕрех ĕнентерме пултарнăскер, пĕтĕм пуçĕпех йанăравлă сасăсен тĕнчине пырса кĕнĕскер, хăй йуратман ĕçе—прихут шкулĕнчи учител помошникĕн ĕçне—йăвăр кăмăлпа, чĕрери кăмранупа туса пынă.

Хăйĕн творчествăри ĕçĕн пултарулăхĕпе, хăвăртлăхĕпе Шуберт питĕ те тĕлĕнтернĕ. Пĕр çулталăк хушшинче вăл (1815 ç.) 150 йурă, 150 йурăна йахăн, икĕ çимфони, тăватă опĕрă çырса пĕтернĕ.

Çирĕм çула çитсессĕн Шуберт шкултан пăрахса тухнă, пĕтĕм вăйне музыкăна парас ĕçе пуçăннă. Çакăншăнах вăл ашшĕ çуртĕнчен те йаланлăхах уйăрăлса кайнă. Вара, хăй пекех кĕлмĕç художниксем, поетсем, актŏрсем—хаваслă тантăшсем—унăн çемйи пулса тăнă.

Çитмен пурнăçпа йурăннă пулин те Шуберт, ăна лайăх шалу парса патша тавраш ĕсен çуртĕнче органист пулма чĕннине хирĕçленĕ, експлоататăрсен тарçи пулма килĕшмен. Хăйĕн опĕрисене вăл сценăсем çинче лартассишĕн çавтери тăрăшнă, анчах театрсенчи чиновниксем ăна йаланах тенĕ пек хирĕç тăнă, унăн произведенийĕсене тивĕçлĕ сăлтавсемсĕрех хурлама хăтланнă.

Хăйĕн тĕлĕнмеле лайăх йуррисене Шуберт пичетлесе кăларма аран-аран майсем тупса пынă. Усламçăн çеç антăхса тăракан купца-нотоиздателсем массă хушшинче ытлашшийех паларса çитмен композитăр çырнисене питĕ те виçелĕ, сахал тиражпа кăларнă. Суту-илӳ тума пултарайман музыканта издателсем, антрепреньорсем, опĕрă чиновникĕсем ирсĕррĕн улталанă.

Шуберт тулли пурнăçпа нихçан та пурăнса курман: унăн пурнăçĕ хуйхăлă, çурма выçăлă пулнă. Çапах унăн çутă кăмăлĕ, чунхавалĕ йаланах пурнăçа йуратакан етемĕн оптимисăмĕпе тулса тăнă. Хăйĕн искусстви çинчен вăл, çав искусствă уншăн йĕритавралăхри тискер чăнлăха художникĕн фантазийĕпе илемлĕлетни пулса тăни çинчен хăйех каланă.

Хăшпĕр лайăх çимфонийĕсем унăн хăй пурăннă вăхăтра пĕр хутчен те сценă çине тухса курман. „Неоконченная симфония" йатлă произведенине хăй вилнĕ хыççăн 40 çула йахăн вăхăт иртсессĕн çеç тупнă. „Гаштейнская" йатлă тепĕр çимфонине халиччен те тупманха. Аслă композитăр 31 çула çитсе йăвăр чирпе калама çук тиншĕмленсе вилнĕ. Вилнĕ-вилменех унăн пурлăхне полици чиновникĕсем опĕç туса илнĕ. Генилĕ музыкантăн мĕнпур пурлăхĕ, çав шутрах унăн вилĕмсĕр произведенийĕсен алçырăвĕсем те, 63 флорин хисепĕпе хакланнă пулнă.

Пурнăçĕ питĕ кĕске пулнă пулин те Шуберт музыкăлă произведенисем питĕ те нумай çырса хăварнă: 9 çимфони, 20 опĕрă, хĕлĕхлĕ инструментсемпе выљамали 15 квартет, 6 уверťурă, хорпа йурламали 54 композици т. ыт. те. Анчах пуринчен те кирли, Шубертăн мĕнпур творчествине уççăн çутатса тăраканни—унăн йуррисем пулнă. 600 йурă! Çак йурăсем ĕмĕрлĕхе вилĕмсĕр, халăхăн чунхавалĕпе çыхăнса тăракан йурăсем—пĕтĕм Йевропăн иртнĕ ĕмĕрти куљтурине илем кӳрекен хаклă ахах пулса, нихçан тĕксĕмленми йалкăшса тăраççĕ.

Етемсен кăмăлĕсен, хĕрӳлĕхĕсен, савнăçĕсен, ĕмĕтри ыратăвĕсен пĕтĕм тĕнчи Шуберт йуррисенче вырăн тупма пултарнă. Хăй çĕршывĕнчи çутçанталăка: йем-йешĕл вăрмансене, шăнкăртатса йухакан çырмасене, лăпкă çилпе шăпăлтатса хумханакан йăвăçсене, пуринчен те ытларах—хăй çĕршывĕнчи ĕççыннисене çав тери чĕрĕ те уçăмлă кăмăлпа, чĕрери хĕрӳ йуратупа, ултавсăр куçпа пăхса сăнлама пĕлнĕ вăл, çавсем çинчен йурă кĕвĕленĕ. Акă, сăмахран, вăл хăйĕн „Прекрасная мельничиха" йатлă йурринче пĕр маçтăр помошникĕн—мељник хĕрне чĕререн йуратаканскерĕн, савăнăçлă каччăн образне параť. Çак савăнăçлăн пурăнма ĕмĕтленекен, хăйĕн ĕмĕтне пурнăçлассишĕн нимĕне те шеллемен каччă аслă композитăрăн тĕп геройĕ пулса тăраť. Шубертăн чи лайăх йуррисенче халăх мелодийĕн чĕрĕлĕхĕ тĕп вырăн йышăнаť, çав чĕрĕлĕх унăн йуррисене тĕлĕнмеле вăй-хăват кĕртет. („В путь", „Куда", „Форель", „Серенада", „Баркаролла").

Нимĕçсен аслă поечĕ Гĕте сăввисем тăрăх Шуберт çĕр йурра йахăн çырнă. „Лесной царь" йатлă йуррăн драмăлă çĕкленĕвĕ тата çутă картинлăхĕ, „Маргарита за прялкой" йатлă йуррăн хавхалантаракан лирикĕ, „Песни арфиста" йатлă йуррăн философилĕ туйăмлăхĕ—пурте вĕсем Гĕте поезийĕпе пĕр картра тăраççĕ.

Йурă йурласа, выçă хырăмпа шарманкă çавăрса çӳрекене („Шарманщик"), савнă тусĕ пăрахнă хыççăн пĕччене йулнă кĕлмĕç каччăна („Зимний путь"), пĕр пысăк хулари асаплăхра пăчланакан поета („Двойник", „Город"—Гĕйне сăввисем тăрăх) Шуберт питĕ те пысăк маçтăрлăхпа, пурнăçри чăнлăхпа сăнласа кăтартаť.

Шуберт произведенийĕсем тĕрлĕ формăлă пулсан та çав произведенисенче музыкăпа поезийĕн, сăвăри сăмахсемпе йантăравăн пĕрлĕхĕ, вĕсем пĕр-пĕринпе таччăн çыхăнса тăни питĕ те тĕлĕнтерет. Ун пек тума музыкăн чи пысăк маçтăрĕсем çеç пултараççĕ. Çав пысăк маçтăрсенчен пĕри Шуберт пулнă.

Унăн çимфонийĕсенче, соначĕсенче, квартечĕсенче час-часах халăхăн чи лайăх йуррисемпе ташшисен кĕввисем йанăраççĕ. Австрийцăсен, чехсен, венгерцăсен халăх музыкине аслă композитăр лайăх пĕлсе тăнă, вĕсемпе вырăнлă усă курнă.

Шубертăн лайăх çимфонийĕсене лирикăлă пысăк поемăсем пулса тăраççĕ тесе хак пама пулаť: вĕсенче уйрăм çын кăмăлĕ, йăвăр хуйăхĕ тата телейлĕх патне хĕрӳлĕн туртăнни тарăн чăнлăхпа сăнланаť („Неоконченная симфония").

Хăйĕн йуррисенче халăхăн ĕмĕтне, халăхăн шухăшне кăтартса пама пĕлнĕ аслă йурăçа аслă Шуберт творчестви пирĕн социалисăмлă çĕршыван—халăх искусствине нихăш ĕмĕр курман пек чечеклентернĕ çĕршывăн çыннисене çывăхран та çывăх тăраť.

И. Н.

„ЧĂВАШПРОМПОЛИГРАФ"
ТИПОГРАФИНЕ КИРЛĔ:
НАБОРЩИК-МЕЛОЧНИКСЕМ
ТАТА
ПЕЧАТНИКСЕМ

Адрес: Шупашкар хули, Плеханăв урамĕ, 31

3—1

Йĕпреçри „Спотара" савăтне хозрасчотлă йединицăсем валљи
КИРЛĔ:

I. ЙĔПРЕÇ СТАНЦИНЧЕ

1. Районри „Спотара" кантур управљайушчийĕ.
2. Аслă бухгалтĕр.
3. Бухгалтĕр.
4. Счетовод-кассир.
5. Катка пичке маçтерскойĕн заведуйушчийĕ

II. „СПОТАРА" ВĂРМАН САВАТĔНЧЕ

1. Вăрман касса хатĕрленĕ çĕрте заведуйушчи.
2. Аслă бухгалтĕр.
3. 2 бухгалтĕр.
4. Кассир тата счетовод.
5. Економист-финансист.
6. Вăрман касса хатĕрленĕ çĕрте 2 десятник.
7. Хăйсен лашисемпе турттаракансем (сезонлăха).
8. Автотранспăрт заведуйушчийĕ.
9. Гужтранспăрт заведуйушчийĕ.
10. Савăт лашисемпе турттаракансем.
11. Машинисттем.
12. Слесăрсем.
13. Токăрсем.
14. Станочниксем.

Çак адрĕспе ыйтса пĕлмелле:
г. Чебоксары, Красноармейская 5, „Спотара", Йĕпреçри, завод „Спотара".

Чăвашпромсойуза економист-конйунктурис, бухгалтĕр, бухгалтĕр-економист
КИРЛĔ.

2—2 Чăвашпромсойуз.

Главлитăн уполномоченнăйĕ № 631

Гор. Чебоксары, типографи № 1 Местпрома ЧАССР, заказ № 832. ф. 6. 58×84 п. л.